24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
20
ЫТЛАРИКУН
116 (5831) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ.

Ирхи çĕртме тырпул тухăçне ӳстерет

Республикăри колхозсен уйăрĕсенче хĕрӳ ĕç пырать: çуртри акаççĕ, çĕрулми лартаççĕ т. ыт. Малта пыракан колхозсем ирхи çĕртме сухине те тытăннă.

Комсомольски районри малта пыракан колхозсем ирхи çĕртме тума тытăнни тăваттăмĕш кун ĕнтĕ. «Интернационал» колхоз 30 гектар сухаланă. «Культура» колхоз çурхи çĕртме сухине виçĕмкун тухнă. Çĕртме сухине тракторсем сухалаççĕ.

Вăрмар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 9 гектар, «Искра Ильича» колхоз 15 гектар ирхи çĕртме тунă. Çавăн пекех «Броневик», «Красноармеец» тата «Дружба» колхозсем те (Калинински р.) ирхи çĕртме тума тытăннă.

Малта пыракан колхозсен руководителĕсем çуркуннехи ялхуçалăх ĕçĕсене черет тăрăх мар, пурне те пĕлсе, пĕр вăхăтра туса пыма вĕренсе çитнĕ. Колхозсен, машинно-тракторăй станцисен руководителĕсен, çĕрĕç органĕсенчи работниксен хальхи вăхăтри пысăк задачи—ака ĕçне, пахча-çимĕç лартас тата ирхи çĕртме тăвас ĕçсене сыхăнтарса, лайăх пахалăхпа туса ирттересси пулать. Çакна тума ĕç вăйне тата туртăм вăйне тĕрĕс йĕркелени кирлĕ. Еçе пĕлсе организацилесен ака ĕçне те, пахча-çимĕçсем лартассине те, калчасене пăхассине те тата ирхи çĕртме сухине те срокра туса пыма пулать. Пĕлсе ертсе пыракан руководительсем савăн пек ĕçлеçĕ ĕнтĕ. Вĕсем пур ĕçе те хăй вăхăтĕнче тăваççĕ, ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелеççĕ, производство средствисемне пĕлсе усă кураççĕ.

Ситес çулхи вăйлă тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешĕве халех пуçармалла. Аслă Сталинăн заданине—8 миллиард пăт тĕштирĕ туса илессине социализмлă ялхуçалăхĕн пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пымалла. Колхозлă ялсем çак мухтавлă задачăна пурнăçлама пултараççĕ. Ăна çинчен кашни гектартан çĕр пăтран кая мар тĕштирĕ туса илессинĕн пур çĕрте те анлăн сарăлнă социализмлă ăмăрту, ялхуçалăх выставкин участникĕсен опычĕсем ĕнентерсе параççĕ.

Çĕр мĕнчухлĕ тухăç пама пултарнине пĕтĕмпех илес пулать. Çакна пурнăçлама агротехника кăтартнă ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыни кирлĕ.

Ирхи çĕртмене срокра тата пысăк пахалăхпа иртермелле, ку вăл стахановла агротехникăн çирĕп требованийĕ пулса тăрать. Ирхи çĕртме сухи планне тултарни—вăйлă тырпулăн кĕрешмелли пысăк майсенчен пĕри пулать.

Партипе правительство хăйсен решенийĕсенче ирхи çĕртме туни тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре мĕнчухлĕ пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен нумай хут асăрхаттарнă. Ирхи çĕртме сухин уссине опытлă станцисен ĕçĕсем те аван кăтартса параççĕ. Саратоври станцире ирхи çĕртме туман участокра гектартан вăтам шутпа 16,2 центнер тырă илнĕ, çав вăхăтрах ирхи çĕртме тунă вырăнта 21,1 центнер туса илнĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем вĕсем пирĕн республикăра та нумай. Сухана тарăлатса пынă май, хăшпĕр опытлă участоксенче иртнĕ çулта гектартан 420 пăта яхăн тырпул туса илнисем те пулнă. Ирхи çĕртме тунипе тырпул тухăçне ӳстерни çинчен ялхуçалăх выставкин участникĕсен опычĕсем аван кăтартса параççĕ.

Ирхи çĕртмене май уйăхĕнче туса ирттермелле. Ирхи çĕртмене çуркуннен малтанхи уйăхĕсенче ирттерни—социализмлă çĕрĕçĕн пысăк культурăлăхне, унăн тимлĕ йĕркелĕхне кăтартса парать. Çав вăхăтрах пирĕн республикăра хăшпĕр колхозсем ирхи çĕртмене хакламаннине тĕл пулма пулать. Тĕрлĕ сăлтавсем тупса, хура пусса мĕнле те пулин сухаламасăр хăварма тăрăшаççĕ, сухаласан та питех те кая юлса сухалаççĕ. Çĕртме сухине хакламасăр тăнине тахçанах пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Ирхи çĕртме сухине халĕ, çак кунсенчех, ирттерме май пуррине малта пыракан колхозсем аван кăтартса параççĕ.

Ирхи çĕртмене пысăк пахалăхпа, агротехника вĕрентнĕ пек ирттерессишĕн кĕрешес пулать. Çĕртме сухине тарăн сухаламалла тата кирлĕ таранах удобрени хывса хăвармалла. Сухана çĕре çавăрса пăрахакан плугпа 20—22 сантиметр тарăнăш сухалас пулать. Ирхи çĕртме сухинче уйрăмăнах предлужникпе анлăн усă курмалла. Çатах та, халь çакна чылай колхозсенче хисепе илесшĕн мар-ха. Хăшпĕр çĕрте колхозсем вĕсемпе кирлĕ пек усă курма тăрăшмаççĕ.

Колхозсен тата машинно-тракторăй станцисен руководителĕсен тата çĕрĕç органĕсен работникĕсен çĕртме сухи пахалăхĕшĕн большевикла кĕрешмелле. Ку ĕçре кăçал иртнĕ çулсенчи йăнăша тумалла мар. Хăшпĕр машинно-тракторăй бригадăсенче иртнĕ çулхи çĕртме сухинче брак тунисем те тĕл пулкаланă: сĕрмелли тата çунтармалли япаласене перекетлетпĕр тесе, 20—22 сантиметр тарăнăш сухалас вырăнне, вĕсем 10—12 сантиметр тарăнăш кăна сухаланă пулнă. Çакăн пек юрăхсăр ĕçе хирĕç кăçал хытă кĕрешмелле, брак тăвакансене закон тăрăх ответ тыттарас пулать.

СССР Верховный Совечĕн депутачĕ С. Коротков юлташ ертсе пыракан орденлă колхоз çĕртме сухи тĕлĕшпе пример кăтартать. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра сухакасси тарăнăшне çулран-çул тарăнлатса пыраççĕ. Ку колхозра малтанхи вăхăтра 10—12 сантиметр тарăнăш кăна сухаланă пулнă. Юлашки çулсенче вĕсем сухакасси тарăнăшне 23—25 сантиметра çитернĕ. Çапла майпа ĕçлесе, вĕсем çулсеренех вăйлă тырпул туса илеççĕ. 1940 çулта вĕсем гектартан вăтам шутпа 180 пăт тĕштирĕ туса илнĕ. Савăн пекех Булатовăри Молотов ячĕпе тăракан (Вăрнар р.), «Динамо» (Куславкка р.) колхозсем те ирхи çĕртмене вăхăтра тата паха туса пыраççĕ. Вĕсем çĕртме уйне яланах тислĕк тата питти удобренисем нумай хывса хăваракаççĕ.

Çĕртме тунипех ĕç пĕтмест. Сухалаcа пĕтерсен, çĕртме уйне тăтăшах, çăвĕпех сăнаса, пăхса тăни кирлĕ. Çăмăр çуса кайсан, суха тунă çĕр итем пек пусăрăнса хытса ларать. Çавăн пек чухне ирхи çĕртме тунă çĕр лаптăкне çĕрелесе тухмалла.

Иртнĕ çулсенчи опытсем çакна кăтартса параççĕ: хăшпĕр колхозсенче ирхи çĕртме сухине сухаласа пăрахаççĕ те, кайран вара ун çинчен мансах каяççĕ. Ун пек колхозсенче вара çĕртме уйĕ—çумкурăксем ĕрчетекен пусă пулса тăрать. Паллах ĕнтĕ, савăн пек çĕртмен уссийĕ пысăк пулма пултараймасть. Çĕртме сухине çăвĕпех хура, кăпăшка вырттарас пулать, çумкурăксене тасатсах тăмалла. Çĕртме сухи тунă пусăна çумкурăксенчен тасатас майпа çу каçа сахалтан та виçĕ хут культиваци тумалла. Савăн пек ĕçлесен кăна çĕртме сухин пахалăхне, унăн усăллăхне ӳстерме пулать. Çумкурăксенчен тасатнă уйхирсем — колхозра агротехника ĕçне йĕркеллĕ туса пынине, колхозлă çĕр ĕçĕн пысăк культурăлăхне кăтартса параççĕ. Кăçал пирĕн колхозсенче çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе иртнĕ çулхинчен анлăрах тата вăйлăрах организацилемелле. Пирĕн колхозсен культурăллă уйхирĕсенче тырпулăн сиенлĕ çӳп-çап валли—çумкурăксем валли вырăн пулмалла. Уйхирсенчи тасалăхшăн, çумкурăксене пĕтерессишĕн уйрăмах Сĕнтĕр, Ишлей, Шупашкар т. ыт. районсен вăйлăн кĕрешмелле пулать.

Пирĕн колхозсем иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре паха примерсем кăтартрĕç. Нумай районсем кĕрхи çĕртме планне ытлашшипех тултарчĕç. Çак паха опыта халĕ ирхи çĕртме тăвас ĕçе куçармалла.

Колхозсен, машинно-тракторăй станцисен, çĕрĕç органĕсен руководителĕсен, партипе совет организацисен задачи—колхоз уйхирĕнчи производствăллă çĕкленĕве çирĕплетсе, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырасси пулать. Социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырса, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсен опычĕсемпе анлăн усă курса, суракине ăнăçлăн вĕçлер, калчасене пăхас, çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе йĕркелер, ирхи çĕртме планне срокра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлассишĕн кĕрешер!

Совет Союзĕпе Ирак хушшинче дипломатиллĕ тата суту-илӳ отношенийĕсем туни

Майăн 16-мĕшĕнче Анкарара ССР Союзĕпе Ирак хушшинче дипломатиллĕ, суту-илӳ тата консульски отношенисем туни çинчен ССР Союзĕн посолĕ Виноградов юлташпа Ирак посланникĕ г. Гайлани çĕр-çĕрипе нотăсем улăштарса илнĕ.

Профсоюзсен çуркуннехи кросĕн срокне улăштарнă

Профсоюзсен хăшпĕр центральный комитечĕсемпе вырăнти организацийĕсем ыйтнă тăрăх, ВЦСПС секретариачĕ профсоюзсен çуркуннехи кросне, малтан йышăннă пек, майăн 18—29-мĕшенче мар, урăх срокра ирттерме йышăннă.

Çуркуннехи кроса ирттермелли срокне çĕнĕрен туса палăртаççĕ. Профсоюзсен физкультура организацийĕсен хăйсен мĕншăн тимлĕхне пулас кроса хатĕрленес тĕлĕшпе тренировкăсем туса ирттереси çине хумалла. (ТАСС).

Харьковпа Киев хушшинчи çул çинче

Харьков патĕнчен темиçе километрлă индустриллĕ Харькова Украина столицине сыхăнтаракан çулăр строительстви пуçланнă. Тăватă пине яхăн колхозник — çĕр чавакансем, кĕпер хуракансем, плотниксем пĕтĕм çул тăрах лагерьсем туса вырнаçса тухнă. Кашни колхоз хăйне уйăрса панă участока йышăннă.

Кăçалхи çул çĕнĕ магистрале ĕçе ярасçĕ. Вăл виçĕ область — Харьков, Полтава тата Киев облаçĕсен территорийĕсем урлă иртсе пырать.

Агротехникăна пăсни пулмалла мар!

☆

Сеялкăсем талăкĕпех ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 19-мĕш. (Телефон тăрăх). Тĕттĕм пулса çитсен сухалакан тата сӳрелекен колхозниксем ĕç пăрахса кĕчĕç. Бригадирсем те вĕсемпе пĕрлех уйхиртен тавăрăнчĕç те колхоз канцелярине кĕре-кĕре юлчĕç. Кашни бригадир пĕр кунхи ĕç çинчен правление сведенисем тăратать.

Паян колхозниксенчен чылайĕшĕ хăйсен нормине ытлашшипех тултарнă. Сăмахран, 6-мĕш бригадăри 4 колхозник суха тунă çĕрте ĕçлеççĕ. Вĕсем 6 гектар сухаласа пĕр кунхи нормăна кашниех 120 процент ытла тултарнă.

Бригадирсем кашни каçах вунă сехет иртсен правлени канцелярине кĕске вăхăтлăха пухăнса, паян тунă ĕçсен итогне сӳтсе-явăççĕ, ыранхи ĕçсен планне пăхса тухаççĕ. Çапла туни ĕçре палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма пулăшать. Малтанхи кунсенче сеялкăпа акакансем хăйсен нормине тултарса пырайман пулнă. Кун çинчен производствăллă канашлура тĕплĕн сӳтсе-явнă хыççăн, сеялкăсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тунă.

Майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа сеялкăсем кăнтăрла тата çĕрле те пĕр чарăнмасăр ĕçлеме тытăннă. Акă паян та сухалакан тата сӳрелекен колхозниксем çĕттĕм пулса çитсен ĕçе пăрахса уйхиртен кĕчĕç, анчах сеялкăсем ĕçлеме пăрахмарĕç. Сеялкăпа ĕçлекенсем кăна улăнчĕç. Пĕр сеялщикĕ аллине фонарь тытнă та лашасене çул кăтартса пырать, тепри — вăрлăх тăпра айне çитĕнсе пынине сăнаса утать.

Çапла вара, кунта сеялкăсем пĕр сантлăха та ахаль тăмаççĕ. 6-мĕш бригадăри сеялщиксем — Г. Петровпа М. Михайлов юлташсем талăкĕпе ĕçлесе 13 ретлĕ сеялкăпа 14 гектар ытла акаççĕ. Ытти бригадăсенче те сеялщиксен ĕç тухăçлăхĕ пысăк.

Ĕç вăйне тĕрĕс организацилеленĕ. Çурхи сухана вĕçленĕ хыççăнах, ирхи çĕртме тума тытăннă. Пĕр ĕç те кая юлса пымасть. Паян тĕштирĕсене колхоз акса пĕтерчĕ. Виçĕ сеялкăпа 197 гектар акнă, вăрлăхсене пĕтĕмпех яровизацилеленĕ.

«Партизан» колхоз. (Хамăр корр.).

Сеялкăсемпе туллин усă курмалла

ÇЕМĔРЛЕ. Майăн 13-мĕшне Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз 150 гектар сухаланă, 140 гектар акнă. Акара 1-мĕш бригада (бригадирĕ С. Спирмилотов), 3-мĕш бригада (бригадирĕ Н. Лукин), 5-мĕш бригада (бригадирĕ И. Таньков) малта пыраççĕ.

Колхоз мĕншăн акмалли лаптăка машинăсемпе акать. Малтанхи кунсенчех вăрлăхлăх викăна алăпа акнă.

Ятарласа производствăллă канашлу ирттернĕ хыççăн мĕншăн сеялкăсене ĕçе янă.

Пĕрремĕш бригадăн сеяльщик С. Тимонов юлташ кашни кун 7—8 гектар акса, нормăна 180—200 процент тултарса пырать. Савăн пекех 5-мĕш бригадăри сеяльщиксем В. Виссаров тата В. Михеев юлташсем 12 ретлĕ сеялкăпа 7-шер гектар акаççĕ. Сеяльщиксем И. Михайлов, М. Мигушов, В. Романов, С. Мигушов юлташсем те хăйсен кулленхи нормисене 130—150 процент тултарса пыраççĕ.

Ĕçре çитменлĕхсем те палăрчĕç. Акă, 5-мĕш бригадăри Т. Петров юлташ вăхăтра вăрлăх тăратман пирки сеялка 3—4 сехет хушши ахаль ларчĕ. Виççĕмĕш бригадăри конюх В. Самсонов юлташ ирхине лашасене вăхăтра сĕлĕ паманнипе сухаçсем 30 минута кая юлса тухрĕç.

Тăваттăмĕш бригадăри сеялкăна лайăх юсаман пирки майăн 12-мĕшĕнче 7 сехет хушши йĕркеллĕ ĕçлеймерĕ.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра МТ Станцин 3 трактор ĕçлет. Тракторсене япăх юсани малтанхи кунсенчех палăрчĕ. Пĕр кун ĕçленĕ хыççăнах У—2 трактор пăсăлнипе трактористсем А. Николаева тата М. Саеров кун çурă ахаль ларчĕç. Тракторист Н. Тарасов газогенераторăй тракторпа куллен 7 гектар сухалаca (норма 5,4 гектар) хăйĕн нормине ытлашшипех тултарса пырать.

С. БАТЬКОВ.

„Кормилец" колхозра

КУКЕÇ. «Кормилец» колхозра ВКП(б) Обкомĕ тата Чăваш АССР Совнаркомĕ «Ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллă ирттернĕшĕн тата пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тăвасси çинчен» йышăннă постановлението сӳтсе-явнă. Постановлението колхозниксем ирласа, вĕсем ăна ĕç хастарлăхне ӳстерипе ответлеççĕ. Ĕçлеме ирхине 3 сехетре тухаççĕ. 9 сехетре тин кĕреççĕ. Хăшпĕр колхозниксем: Я. Трофимов, М. Краснов т. ыт. те — ĕç нормине 100—150 процент тултарса пыраççĕ.

М. ЕФРЕМОВ.

Хăяр сутма тытăннă

ИШЛЕЙ. «Красное знамя» колхоз кашни çулах ирхи пахча-çимĕçсем туса илет. Колхозра ирхи пахча-çимĕçсем лартса ӳстерме теплица тунă. Çав теплицăри çимĕçсем пулса çитнĕç. Çак кунсенче колхозра хăяр сутма тытăннă, хăярсем питĕ шултра пулнă.

И. ТАТАРОВ.

Çуранинче пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн ВКП(б) райкомĕсем тата ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малтан пыракансене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

29. **В. П. Трошкин, М. Ф. Храмов, М. П. Яковлев** — Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри 2-мĕш бригадăн сеяльщикĕсем, лашапа ĕçлемелли 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14-шар гектар акаççĕ.

30. **Ф. Л. Наумов, А. М. Бурлаков, Ф. С. Ерошин** — Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри 3-мĕш бригадăн сеяльщикĕсем, лашапа ĕçлемелли 11 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14 шар гектар акаççĕ.

31. **А. С. Миронова** — Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозници, икĕ касăллă плугпа норма тăрăх 1,75 гектар вырăнне кашни кун 2,31 гектар сухалать.

32. **Е. П. Трошкина** — Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозници, 3 сӳре кăкарнă лашапа ĕçлесе норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 9,75 гектар сӳрелет.

33. **Ф. Х. Мутин** — Вăрнар районĕнчи «Первое Мая» колхоз колхозникĕ, 3 сӳре кăкарнă лашапа ĕçлесе норма тăрăх 6 гектар вырăнне кашни кун икшер хут 9,5 гектар сӳрелет.

34. **О. Т. Тимофеева** — Красноармейски районри «Волга» колхоз колхозници, 3 сӳрепе норма тăрăх 6,5 гектар вырăнне кашни кун 10 шар гектар сӳрелет.

35. **Е. П. Прокопьева** — Красноармейски районри «Красная Чувашия» колхоз колхозници, 3 сӳрепе норма тăрăх 6 гектар вырăнне кашни кун 9-шар гектар сӳрелет.

36. **«Красный партизан»** колхоз (председателĕ Д. А. Алексеев юлташ) — Шăхасан районĕ. Колхоз çурхи тĕштирĕ культурисене 6 кун хушшинче, агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

РАЙОНСЕН ÇУРАКИРИ ĂМĂРТĂВĔ

(Майăн 19-мĕш тĕлне)

Канаш—Шăхасан

Канаш районĕ çуртри пĕтĕмпе 6879 гектар акнă, вăл 69 процент ытларах пулать. Районĕпе 8 колхоз акса пĕтернĕ.

Шăхасан районĕ пĕтĕмпе 5269 гектар акнă, вăл 40,5 процент пулать. Районĕпе 3 колхоз акса пĕтернĕ.

Куславкка—Октябрьски

Куславкка районĕ çуртри пĕтĕмпе 2647 гектар акнă, вăл 31,2 процент пулать.

«Новая жизнь» колхоз çуртрисене акса пĕтернĕ.

Октябрьски райсĕвĕç пайĕн заведующийĕ Леонтьев юлташ паянхи куна районри колхозсем мĕн чухлĕ çуртри акнине пĕлмест.

Вăрмар—Тăвай

Вăрмар районĕ çуртри пĕтĕмпе 5400 гектар акнă, вăл 36 процент ытларах пулать.

Тăвай районĕ пĕтĕмпе 5871 гектар акнă, вăл 53 процент ытларах пулать. Районĕпе 4 колхоз акса пĕтернĕ.

Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшни çук

Улатăр районĕнчи çĕнĕ Айбеç ялĕсенчи «Правда» колхоз агротехникăна пăсать. Сăмахран, колхозăн 386 центнер сĕлле яровизацилесе тата формалин шывĕпе çуса акмалла пулнă, анчах колхоз 143 центнер кăна яровизацилесе акнă. Кĕрхи калчасене çуркунне 200 гектар сӳрелемелле пулнă, паянхи куна 14 гектар çеç сӳреленĕ. План тăрăх кĕрхи калчасене 150 гектар çинче апат парас вырăнне, 14 гектар çинче çеç панă.

«Правда» колхозра çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттересси çинчен сахал шухăшлаççĕ. Çуракине кунта майăн 4-мĕшĕнче тухнă. Пурĕ тĕштирĕ, тымар-çимĕç, техникăллă культурăсем колхозăн 543 гектар акса, лартса хăвармалла. Паянхи куна 90,5 гектар кăна акма ĕлкĕрнĕ. Уйрăмăнах 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсенче çуракине ирттерме уйăрнă çынсем нихăçан та ĕç нормине тултарса çурман. Мĕншĕн тесен, ĕçе вĕсем 7 сехетре ирхине тухаççĕ те кăнтăрлахи апата 10 сехетрех кĕреççĕ, кăнтăрла 10 сехетрен пуçласа 4 сехете çитиччен, 6 сехет хушши канаççĕ, 4 сехетре тухса 7—8 сехетчен ĕçлеççĕ. Çапла вара 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăри колхозниксем çуракине тухнăранпа нихăçан та кунне 6—7 сехетрен мала ĕçлесе курман. Çак бригадăсенче ĕçе пысăк пахалăхпа туса ирттересшĕн те тăрăшмаççĕ. Сăмахран, П. Кукушкин шырлăк хăварса сухалать.

Сӳрелекен кашни колхозник сумне икшер лаша çирĕплетсе панă. Çапла, икĕ бригадăра сӳрелекенсем 6 çын пулмалла. Анчах кунта апла мар. Хире чиперех ултă çын хăйсен 12 лашине çавăтса тухаççĕ, анчах лашисене кӳлсе тăратсанах тăваттăшĕ «çухалаçĕ», пĕр вăхăтлăха вара иккĕшĕ 12 лашапа (пĕр çын ултă лашапа) сӳреleçĕ. Пĕр-икĕ сехет иртсеççĕн «çухалниçенчен» иккĕшĕ «тупăнаççĕ» те, вĕсем сӳрелеме пуçлаççĕ, малтан сӳреленисем кусем вырăнне каллех «çухалаççĕ». Ăçта каяççĕ-ха вĕсем? Вĕсем «сменăпа» ĕçлеме вĕренĕ. Пĕри ĕçленĕ чух теприсем сывраççĕ е чĕлĕм туртса лараççĕ. Ку бригадăсен бригадирĕсем С. Лысовпа Сапожников çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем çинчен пĕлеççĕ пулин те, вăл йĕркесĕрлĕхсене вăхăтра пĕтересси пирки нимĕн те тумаççĕ.

Колхоз çуракинче начар ĕçлени колхозниксем хушшинче агитмассăллă ĕç суккинчен килет. Кашни бригада çумне агитаторсемпе хаçат-журнал вуласа паракансене çирĕплетсе тухнă. Анчах агитаторсем хирте ĕçлекен колхозниксем хушшинче питех те сахал пулаççĕ.

Ф. СОРОКИН.

Çитменлĕхсене пĕтермелле

ЭЛĔК. Янкурасри «Звезда» колхоз акана лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Халĕ çуракине ăнăçлăн ирттерес тĕлĕшпе бригадăсем, звеносем тата колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, вăрлăхсене пурие те яровизацилесе акаççĕ.

Массăллă-ăнлантаруллă ĕçе туса пыма агитаторсем палăртнă, вĕсем колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, кашни бригадăрах стена хаçачĕ тухса тăрать.

Анчах çуракине ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Кунта сеялкăпа туллин усă курмаççĕ. Час-часах сеялкăна ĕçлет-термесĕр лартаççĕ, çакăн пирки ĕнтĕ акас тĕлĕшпе нормăна 80 процент çеç тултарса пыраççĕ. Кунсăр пуçне ăшăрах сухалаççĕ, хăшпĕр çĕрте шăйăрăсем те хăварнă.

Яркуньушкĕнчи «Маяк» колхозра акана хăвăртлăх çителĕксĕр. Колхозра 3 бригада, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемеççĕ.

Колхоз ака ĕçне 10 кун хушшинче вĕçлеме пулнă. Майăн 14-мĕш тĕлне 1-мĕш бригада сухаламалли çĕр лаптăкĕнчен 50 процентне, 2-мĕш бригада — 46, 3-мĕш бригада — 67 процентне çеç сухалана, колхозĕне те 10 гектара яхăн анчах сӳреленĕ.

Уйрăмăнах акасси начар. Кунта икĕ сеялка, вĕсемпе туллин усă курмаççĕ. Колхозра ĕçе ирхине ирех тухмаççĕ, каштах çăмăр çусанах ĕçрен кĕреççĕ те, кунĕпех килте лараççĕ.

Бригадирсем колхозниксен ĕçне учета илсе пымаççĕ, колхозниксен ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине март уйăхĕнчен вара çырман.

Кашни бригада çумнех ятшăн пĕрер агитатор çирĕплетнĕ. Вĕсем массăллăăнлантаруллă ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ, бригадăсенче стена хаçачĕсем пачах кăларман.

Н. ДМИТРИЕВ.

Акара виçĕ сменăпа ĕçлеççĕ

ÇЕРПУ, майăн 19-мĕш. (Телефон тăрăх). Майăн 18-мĕшне районĕпе колхозсем 1125 гектар çурхи суха тунă.

Районра «Красный герой», «Красная Чувашия», «КИМ» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем тĕштирĕ акса пĕтернĕ.

«Красный герой» колхоз çуракинче график тăрăх ĕçлерĕ. Графика кулленех тултарса пынă. Пур вăрлăхсене те формалин шывĕпе çуса акнă. Мĕнпур вăрлăхран 43 процент таран яровизацилесе, пĕтĕмпех сеялкăпа акнă. 6 гектар хĕреслĕ майпа акса хăварнă. Акана 7 кун вырăнне 6 кунта вĕçленĕ. Халĕ колхоз çĕрулми лартать.

Лапра-Кушкă ялсоветне кĕрекен «Совет» колхозра акара виçĕ сменăпа ĕçлеççĕ. Осипов, Филиппов, Прокопьев сеяльщиксем 11 ретлĕ сеялкăпа 6 гектар вырăнне 8 гектар акаççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче халĕ те агротехникăна пăсаççĕ-ха. «Красный Октябрь» тата «Боец» колхозсенче сеялка пур çĕртех 100 гектар алăпа акса хăварнă. Парти райкомĕн бюровĕ «Красный Октябрь» колхоз председательне—парти членĕн кандидатне — Семенов юлташа çураки ĕçне тивĕçлипе ертсе пыманшăн тата агротехникăна пăснине хирĕç кĕрешменшĕн выговор панă.

Н. МИРОНОВ.

Тĕштирĕсене акса пĕтерчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Майăн 16-мĕшĕнче Тĕрер ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» тата «Калиновка» колхозсем тĕштирĕсене акса пĕтерчĕç. Акнă лаптăкран 65 процент икĕ колхозĕнче те яровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварнă. Акă ĕçĕнче сеялкăсемпе туллин усă курнă. Ку колхозсем хăйсен сеялкисене кӳршĕ колхозсене усă курма пачĕç.

И. Ермолаев, И. Тимофеев юлташсем акассипе, И. Павлов, Н. Осипов, Д. Алексеев, Е. Прокопьева, А. Сорокина юлташсем сухалассипа плана 100—150 процент тултарса пычĕç.

Майăн 18-мĕшĕнче Енăшкă Чӳллăри «Победа», Янкасри «Волга» колхозсем те тĕштирĕсене акса пĕтерчĕç.

П. МАЙОРОВ

КАНАШ, майăн 17-мĕш. (Телефон тăрăх хамăр корр.). Малта пыракан колхозсем çуракине вĕçлеççĕ. Енер Катеркри Киров ячĕпе тăракан колхоз тĕштирĕсене акса пĕтерчĕ. Пĕтĕмпе 794 гектар акнă. Вăрлăхсене пĕтĕмпех яровизациленĕ, сеялкăпа акнă. Çураки эхатĕнче кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухса тăнă.

Районра халь Кипечри «Хавас» колхоз та çуракине вĕçлерĕ. Кунти колхозниксем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Сергеев, Соловьев тата Васильев юлташсем 1,20 гектар вырăнне, 1,40-шер гектар сухаланă. Акакансенчен Иванов тата Сапожников юлташсем лайăх ĕçлерĕç, вĕсем хăйсен нормисене кулленех иртерсе тултарса пычĕç.

Çĕртме тума тытăнчĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 19-мĕш. (Телефон тăрăх). Виçĕмкун «Интернационал», «Культура» тата «15 лет Чувашии» колхозсем кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕç. «Культура» колхозра тракторпа 20 сантиметр тарăнăш сухалаçĕç. «Интернационал» колхоз паянхи куна 30 гектар сухаларĕ.

Сталин ячĕпе тăракан, «Клевер, «Новая жизнь» колхозсем çĕрулми лартса тĕтĕрчĕç.

Паян районри пур колхозсем те тĕштирĕсене акса пĕтереççĕ.

П. КАЗАКОВ,
Райсĕвĕç пайĕн заведующийĕ.

Хăмла лартма хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе уйрăм звено çĕлет. Вăл звенона Горшков юлташ ертсе пырать.

Колхоз иртнĕ çул гектартан 5,8 центнер хăмла туса илнĕ. Кăçал хăмла тухăçлăхне татах та ӳстерме тăрăшаççĕ. Звено хăмла лартмалли çĕре çемçетме удобренисем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне хăмла вырăнĕ çине канав тăрăх шыв кĕртеççĕ.

Хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе çĕлекен звено çурхи ĕçсене тытăнчĕ. Халь хăмла вырăнне хатĕрлеççĕ. Звенори колхозниксенчен В. Лукинов, К. Солякова, Е. Матвеева юлташсем тăрăшса çĕлеççĕ. Вĕсем ĕç нормине 120—140 процент таран тултараççĕ.

Я. К.

Индий ятлă хаклă металл кăларни

Индий — кĕмĕл тĕслĕ шурă, çемçе металл, вăл сайра тата пит сахал хисеппе тĕл пулать. Ăна цинк, тăхлан рудисен отхочĕсенчен сложнăй майпа çĕлесе кăлараççĕ. Çак питех те хаклă метала пĕтĕм тĕнчипе те çулсерен темиçе тонна чухлĕ кăна кăлараççĕ. Ку тарничен пирĕн çĕршывра индие вунпар граман çеç кăларнă.

Сайра тĕл пулакан металсен научно-исследовательски институт завод коллективĕ таса индие промышленность енĕпе кăларас ĕçе йĕркеленĕ. Çак металл уйрăмăнах электротехникăра телевидени валли кирлĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ

ВКП(б) Кувакино райкомĕн инструкторĕ А. Бочков юлташ çак ĕçре пĕр çулталăка яхăн кăна ĕçлет-ха. Унччен вăл комсомол работникĕ пулнă. Çавăнпа та унăн малтанах райком инструкторĕ пулса ĕçлеме çăмăлах пулман. ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулăшнипе, «Партийное строительство» тата ытти журналсемпе, хаçатсемпе усă курнипе А. Бочков юлташ партиллĕ ĕçе часах хăнăхса ситнĕ.

Унăн участокĕнче пуçламĕш парторганизацисем 5, кандидат групписем 4 тата пĕччен коммунистсем 5 сын. Инструкторăн çак пуçламĕш парторганизацисемпе, кандидат групписемпе тата вĕсенчи коммунистсемпе тачă сыхăнса ĕçлесе пымалла, пуçламĕш парторганизацисемпе кандидат групписен руководителĕсене пулăшмалла. Райком инструкторĕ А. Бочков юлташ пуçламĕш парторганизацисемпе, кандидат групписемпе, коммунистсемпе кăна мар, беспартийнăй активпа та тачă сыхăну тытать. Вăл пуçламĕш парторганизацисемпе пĕрле беспартийнăй активăн пухăвĕсене туса ирттерет, унта партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен ăнлантарса парать, малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене парти ретне суйласа илес ĕçре пуçламĕш парторганизацисене пулăшать. Бочков юлташ партие илме заявлени кăна юлташсемпе хăй тĕплĕн паллашать, вĕсем производствăра тата обществăллă ĕçре мĕнле ĕçленипе интересленет. Рекомендаци параканскене çамрăк коммунистсене воспитани пама вĕрентет, пулăшать. Çапла, Атнашин, Артюшин, Казаков юлташсем рекомендацисене устав хушнă пек паман, çакна пула вĕсен рекомендацисене пăрахăçа кăларма тивнĕ. Инструктор хушнипе çак коммунистсем çинчен парти пухăвĕнче ыйту лартса сӳтсе-явнă.

Бочков юлташ пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене кашни коммуниста партиллĕ поручениесем пама, вĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслеме пулăшать. Çакăн пекех вăл пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене парти райкомĕ панă поручениесене пурнăçа кĕртме активлăн хутшăнтарать. Мишуковăри пуçламĕш парторганизацинчи рядовăй коммунистсем: Глухов, Маночкин, Баринов юлташсем те парти райкомĕ хушнă ĕçсене лайăх туса пыраççĕ. Вĕсене çак ĕçре райком инструкторĕ Бочков юлташ нумай пулăшать.

Пĕр вăхăтра Бочков юлташ участокне кĕрекен чылай пуçламĕш партăрганизацисемпе кандидат групписенче коммунистсен пухăвĕсене нимĕн хатĕрленмесĕр ирттернĕ пулнă. Райком инструкторĕ çак ситменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ. Вăл пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе кандидат групписен парторгĕсене пухăва коммунистсен пухуне мĕнле хатĕрленсе ирттерес ыйтупа калаçнă. Халĕ «Красный партизан» колхозри тата ытти пуçламĕш парторганизацисенче пухусем тĕплĕн хатĕрленнипе, ыйтусене тĕплĕн сӳтсе-явнипе, конкретлă решенисем йышăннипе иртеççĕ. Бочков юлташ пуçламĕш парторганизацисенче пухусем мĕнле иртни çинчен, йышăннă решенисене пурнăçласси мĕнле тăни çинчен ВКП(б) райкомне вăхăтра пĕлтерсе тăрать.

ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ пуçарнипе Рындино ялĕнчи коммунистсем М. И. Калинин юлташ коммунистла воспитани çинчен тунă доклада тĕплĕн вĕреннĕ.

Бочков юлташ пуçламĕш парторганизацисенче партиллĕ хуçалăха йĕркеллĕ тытма организаци руководителĕсене нумай пулăшать.

Р. ТЕРЕНТЬЕВ.

Çак парторганизаци ĕçне райком пĕлет-и?

ИЕПРЕÇ. Туçари пуçламĕш парторганизацинче 11 коммунист, вĕсенчен пурте пекех ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеççĕ, Анчах кунти пуçламĕш парторганизаци коммунистсен авангардлă рольне ӳстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемен. Коммунистсенчен хăшĕпĕрисемпе партипе государство дисциплинине пăснисем те пулнă. Вĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕсенче пĕрре те сӳтсе-явман. Пуçусем те йĕркеллĕ пулса пыман, иртнĕ çулта мĕншĕрре те 6 пуху çеç туса ирттернĕ. Пуху протоколĕсем пурте çук. Çавăн пекех, пуçламĕш парторганизацин иртнĕ çулти отчечĕ пе çухалнă.

Пуçламĕш парторганизаци хăйĕн территорийĕнчи колхоз, шкул, вулав çурчĕ тата ытти обществăллă организацисен ĕçĕсемпе пачах интересленмест, çак ыйтусене коммунистсен пухăвĕсенче сӳтсе-явман.

Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерес тĕлĕшпе те ситеĕкĕсĕр ĕçлеççĕ. Коммунистсенчен пĕри те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухман. ВКП(б) райкомĕ парти историне вĕренме организацилене кружок ĕçлеме чарăннă. Парти кандидачĕсен пĕрин те партиллĕ поручениесем çук.

1940 çултанпа пуçламĕш парторганизацин секретарĕ виçĕ хут улшăннă. Çакă та ĕнтĕ парторганизацине йĕркеллĕ ĕçлесе пыма чылай чăрмав кӳнĕ. Пуçламĕш организацин малтанхи секретарĕ Симбирцев хăй ирĕкпех секретарь ĕçне тата колхоз правлени председателĕн обязанноçĕсене пăрахса тухса кайнă, ялсовет председателĕ Моргунов прогул тунă, коммунист Никонов, парти членĕн кандидачĕ Васьков юлташсем ĕçкĕпе явăçса кайнă.

Çавăнпа ĕнтĕ отчетпа суйлав пухăвĕ пуçламĕш организацин ĕçне ситеĕкĕсĕр тесе хак парса хăварнă.

Комсомолецсене политикăллă воспитани парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен: кунти комсомолецсем колхоз производствинчи ĕçпе сахал интересленеççĕ, час-часах ĕçсĕр çӳреççĕ, картла выляççĕ т. ыт. те. Ермолаев комсомолец государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлемест. Комсомол организацин секретарĕ Сибетов юлташ хăй те дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе сахал тăрăшать, тепĕр чухне хăй те дисциплинăна пăсакан комсомолецсен çулĕ çине тăрать.

Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантау ĕçне куллен туса пымаççĕ. Çулталăк хушшинче тĕрлĕ ыйтусем тăрăх 17 каласу кăна туса ирттернĕ. Чылай колхозниксем, уйрăмăнах фермăсенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем, партипе правительство лайăх ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление ăнланмаççĕ. Çавăн пекех, XVIII партконференци йышăннă решенисем çинчен те тĕплĕн ăнлантарса паман. Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне тивĕçлипе туса пыманни пирки ялсоветпа колхоз районра чылай ĕçсем тăрăх кая юлса пыраççĕ. Укçа-тенкĕ пухмалли пĕрремĕш квартал планне пĕтĕмпе те 67,5 процент çеç тултарнă.

Колхоз правленийĕ çирĕп йĕркелĕхшĕн кĕрешмест, лаша витисем таса мар. Хăшĕпĕр конюхсем лашасем валли уйăрса хăварнă фуража хăйсен килĕсене илсе кайнисем те пулнă. Ферма витисем тума кӳрсе килнĕ стройматериалсене колхоз правленипе фермăсене ăшăтнă çĕре çунтарса пĕтернĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçласси те çителĕксĕр. Колхозăн пĕрремĕш кварталта государствăна 15 центнер аш-какай памалла пулнă пулсан, 9,51 центнер çеç леçсе панă. Сĕт-çу поставкин планне те тултарса пымаççĕ.

Апла пулин те, пуçламĕш парторганизаци колхозниксене государство умĕнчи парăмсене вăхăтра пурнăçлама мобилизацилемен.

ВКП(б) Иепреç райкомĕ çак ситменлĕхсене лайăх пĕлсе тăнă. Çапах çак пуçламĕш парторганизацине тивĕçлĕ пулăшу паман.

А. МОЛОСТВОВ.

Паян шкулсенче испытанисем пуçланаççĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ шкулта 4 мĕш «А» класра вĕренекенсем Диана Говш (сулахайра) тата Эля Семенова литературăпа испытанине хатĕрленеççĕ. Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавшăн кĕрешеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («**Чăваш Коммуни**» **корр.**). Киров ячĕпе тăракан шкулта 559 ача вĕренет. Кунта кашни класс пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Илнĕ обязательствăсене кам мĕнле пурнăçласа пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Шкул дирекцийĕпе местком кăçалхи вĕренӳ çулĕн 1-мĕш çурçулĕ хыççăн классем тăрăх куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавсем (пĕтĕмпе 3) организацилерĕç. Çакă вара вĕренӳ пахалăхне лайăхлатса пыма чылай пулăшать. Мĕнпĕн тесен, хĕрлĕ ялава чи малта пыракан класс кăна илме пултарать.

Пĕрремĕш ялава малтанах 1-мĕш «Б» класа панă, унтан вăл 3-мĕш «А» класа куçрĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура та ку класс начар мар результатсем кăтартрĕ. Вĕренекенсенчен (пĕтĕмпе 40 ача) пурте вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраççĕ, «плохо» паллăсем илекенсем çук. Çавăнпа куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав халĕ те ку класс аллинчех тăрать.

Иккĕмĕш ялав вăтам классенче çӳрет. Малтан вăл 5-мĕш «Б» класра пулнă, унтан 5-мĕш «А» класа куçрĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура хĕрлĕ ялава 6-мĕш «А» класс илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Виççĕмĕш ялава 10-мĕш класс çирĕппĕн тытса тăрать. Малтан ку класра 30 ачаран пĕри вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман, халĕ вара 100 процентчĕпех ĕлкĕрсе пыраççĕ, пурте комсомолецсем, кашниех пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухса договорсем сырнă.

10-мĕш класра вĕренекенсем ытти ĕçсем енĕпе те пример кăтартаççĕ, чылайĕшĕсем кружоксене ертсе пыраççĕ. Акă, Федоров, Осоавиахим организацине ертсе пырать, хăйĕн 3 оборона значокĕ пур, Кирель—струннăй оркестр руководителĕ т. ыт. те.

Колхозлă ялсенчи библиотекăсем

Хаçат-журнал тата тĕрлĕрен литература вуласси ĕçсыннисен йăлине çирĕппĕн кĕрсе пырать. Красноармейски районри Янкас ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем нумайĕшĕ мĕнле те пулин хаçат е журнал сырăнса илсе вуласçĕ. Кун пек примерсене, паллах, хамăр республикăра кăна çĕршерĕн илсе кăтартма пулать. Колхозлă ялсенчи клубсен, вулав çурчĕсен тата унта ĕçлекен библиотекăсен шучĕ те хăвăртăн ӳсет. Библиотекăсен фондне тĕрлĕрен ыйтусем тăрăх çырнă çĕнĕ литературăпа пуянлатсах пыраççĕ.

Колхозлă ялсенче библиотекăсенчен тĕрлĕ кĕнекесем илсе вулакансен шучĕ пĕчĕк мар. Ĕçсыннисем хаçат-журнал тата кĕнекесем вуланипе хальхинчен те лайăхрах пурăнма, пулас пурнăçăн татах та активлăн кĕрешме, ĕç çине коммунистла пăхма вĕренеççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Чуваш ЦИК» колхозри сад-пахчи ăстин Сергеев юлташăн хăйĕн библиотека пур. Библиотекăра Мичурин çырнă кĕнекесем тата сад-пахчи ыйтăвĕсене çутатса параканнаучнăй журналсем ытларах. Сергеев юлташ хаçат-журнал, кĕнеке вуласа лайăхрах ĕçлеме çĕнĕ пĕлӳ, çĕнĕ вăй-хал пухать.

Пирĕн ялсенче социализмлă çĕнĕ интеллигенци ӳсет. Учительсен, агрономсен, зоотехниксен чылайĕшĕн хăйсен библиотекăсем пур. Çав вăхăтрах эпир колхозлă ялсенчи библиотекăсен фондне шуянлатса пыма кирли çинчен манма пултараймастпăр. Партипе правительство çак ĕçе вăйлатса пыма çулсеренех укçа-тенкĕ нумай уйăрса параççĕ. Тĕрлĕ литература çулсеренех миллионшар тиражпа пичетленсе тухать. Чăваш КОГИЗ-ăн Çĕрпӳ районĕнчи магазинĕ пĕрремĕш кварталта кăна 19.680 тенкĕлĕх литература сутнă. Чылай библиотекăсем хăйсен кĕнеке фондне ӳстернĕ. Анатри Кипекçери тата Лапра Кушкăри (Çĕрпӳ р.) библиотекăсенче пилĕк пин кĕнеке ытла шутланать. Политика, техника, ялхуçалăх, илемлĕ литература кĕнекисем нумай.

Çĕрпӳ районĕнчи 33 ялсоветра пуринче те библиотекăсем пур. Пĕтĕмпе илсен, фондра 37 пин кĕнеке ытла шутланать.

Лапра Кушкăра библиотекăран кĕнеке пĕрмай илсе вулакансен шучĕ 150, Шĕнерти библиотекăран илсе вулакансен шучĕ 300 çынтан иртеççĕ. Çавăн пекех Ямашри вулав ӳртĕнче вулакансен йышĕ халĕ 250 çынран иртнĕ.

Анатри Кипекçери библиотекăра та вулакансен йышĕ пысăк. Вулакансен ыйтăвне тивĕçтерсе пыма тăрăшмалла. Анчах та кунта вулакансем ыйтакан пур кĕнекесем те, сăмахран, А. Толстой çырнă «Хлеб» тата ытти паллăрах кĕнекесем çук.

Вырăнсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен колхозлă ялсенчи библиотекăсен ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пымалла. Колхозник библиотекăна пырса хăйне интересленторекен кĕнекене илме пултартăр.

Т. МАЙОРОВ.

Советлă Латвири госфилармони

Рига хулинче Латви СС Республикин государство филармонийĕ уçăлнă. Пысăк концерт пулнă. Симфониллĕ оркестр латыш тата вырăс композиторĕсен произведенийĕсене выляса панă. Оркестрсăр пуçне филармони çумĕнче хор, юрăпа ташăн этнографиллĕ ансамблĕ тата ытти тем те пулаççĕ. Филармонине тытса тăма кăçалхи çул пĕр миллион тенке яхăн уйăрнă.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Вырăнти информацисем районри хаçатсенче

Вырăнта пулса иртекен çĕнĕ хыпарсем çинчен вулакансем чи малтан районри хаçатсене вуласа пĕлеççĕ. Çавăнпа та районри хаçатсен вырăнти информацийĕ хыпарсем сине тимлĕнрех çаврăнса пăхмалла, вĕсем районри предприятисенче, колхозсенче, учрежденисенче, шкулсенче пулса иртекен ĕçсем çинчен яланах пĕлтерсе тăма тивĕç.

ЦК ВКП(б) районри хаçатсем çинчен йышăннă решени редакци тулашĕнчи авторсен активне хаçат ĕçне ытларах явăçтарма хушать. Рабселькорсен материалĕсемпе ытларах усă курăни вырăнти информацийĕ хыпарсене сутатас ĕçе те лайăхлатма пулăшать.

Пирĕн республикăри районри хаçатсенчен чылайĕшĕсем вырăнти информацийĕ хыпарсене сутатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Хăшĕпĕр районри хаçатсем информацисене вăхăтра сутатмаççĕ. Тепĕр чухне уйăха яхăн калăпăлă пулса иртнĕ ĕçсем çинчен çырнине те курма пулать. Паллах, çакăн пек «çĕнĕ» хыпарсем вара хăйсен хакне пачах çухатаççĕ.

Чылай районсенчи хаçатсем иртнĕ вăхăтра «Район тăрăх» ятлă раздел тунăччĕ. Анчах çак пуçăннă ĕçе нумайĕшĕсем сӳнтерсе лартрĕç, «Район тăрăх» текен раздела организацилеме чарăнчĕç.

Эпир «Ленин çулĕпе» хаçатăн март тата апрель уйăхĕсенче тухнă номерĕсен комплектне (Шупашкар районĕ) пăхса тухрăмăр. Тӳрех калас пулать, хаçат страницисенче вырăнти информацийĕ хыпарсене сахал сутатаççĕ. Хăшĕпĕр номерсенче вырăнти хыпарсене ытла та кĕскен тата савăрнăçусăр пĕлтереççĕ.

Иртнĕ хĕл оборонăпа физкультура ĕçĕсем анлăн сарăлса пынипе паллă пулчĕ. Комсомолецсен заочнăй йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ, профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросĕ тата Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа йĕлтĕрĕсен ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Çак ĕçсем çинчен районри хаçатра тăтăшах çырса тăмалла пулнă. Анчах Шупашкар районĕнчи хаçат çинче оборонăпа физкультура ĕçĕсем çинчен çырнă хыпарсене сахал тĕл пулма пулать. Март тата апрель уйăхĕсенче йĕлтĕрĕсен ăмăртăвĕсем пирки сайра-хутра пĕчĕк заметкăсем пичетленипех ертсе кайнă.

Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентесси мĕнле пыни, группăсем, командăсем, отрядсем мĕнле ĕçлени çинчен хаçатра пĕр сăмах та çук. Осоавиахимовецсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе малта пыракан группăсен, отрядсен опычĕсене те хаçатра сутатмаççĕ.

Апрель уйăхĕнче комсомолецсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл ăмăртусене комсомол ретĕнче тăман çамрăксем те йышлăн хутшăнчĕç. Комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсем вăл ăмăртусенче хăйсен сывлăхне çирĕп-чĕн çутăлма вĕренмелле.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин павильонĕсемпе уçă вырăнти участокĕсенче халăх пуçарулăхĕн аслă вăйне анлăн кăтартса параççĕ. Узбекистанпа Таджикистан павильонĕсенче халăх шывшăн пуçланă, пушкăрсенчен чечекленсе тăракан уйăрсем туса хунă движенине кăтартса панă. Воронеж, Курск, Тамбов тата Пенза облаçĕсен павильонĕнче Таловски районри «Железнодорожник» колхоз çинчен каласа панă. Çак колхоз пуçарнипе пĕр иртнĕ çул хушшинче кăна 16 пине яхăн çĕнĕ водоемсем тунă, 22 пин ытла кивĕ пĕвесемпе водоемсене юсанă. Белорус ССР павильонĕнче Любаньск районĕнчи колхозсен экспоначĕсем — шурлăхсене типĕтессишĕн пыракан движенине пуçласа янă колхозсен экспоначĕсем пĕр раздел йышăнса тăраççĕ.

Пĕр вырăнта пурăнма пуçларĕç

Ербент районĕнчи (Ашхабад облаçĕ) Андреев ячĕпе тăракан, «Коммунист», «20 лет Октября» колхозсенчи колхозниксем Центральнăй Кара-Кумран Чарджоу облаçĕнчи Сакар районне яланах пĕр вырăнта пурăнма куçса кайнă. Кăçалхи çул пуçланнăранпа пушхиртен Аму-Дарья юханшывĕпе Мургаб бассейнĕнчи тырă лайăх пулакан çĕрсем çине халиччен вырăнтан вырăна çӳренĕ 22 колхоз куçса кайнă. Кунсăр пуçне, Красноводск облаçĕнчи шывлă вырăнсенче вырăнтан вырăна çӳрекен 32 колхоз вырнаçса ларнă.

Марый облаçĕнчи Чагин районĕнчи Чашкент ауылĕнчи ялхуçалăх артелĕн колхозниксĕсем, Кара-Кумран çăкăнта куçса килнĕ хыççăн, кăçалхи çуркунне нумай ĕмĕрсем хушшинче пирвайхи хут çĕр ĕçĕ тума тытăннă. Вĕсем çĕрмамăк, тулă тата люцерна акнă.

Колхозник-переселенецсен хуçалăхĕсене йĕркелесе яма кăçалхи çул 12 миллион тенкĕ ытла панă.

А. ЗВЕРЕВ

СССР Финанс Халăх Комиссарĕ

Совет государствин заемĕсем

Совет государствин заемĕсене тăван çĕршыври халăх чун-чĕререн хапăлланине пурте пĕлеççĕ. Пирĕн çĕршывра тухакан кашни заемах пĕтĕм халăх ырласа кĕтсе илет. Заем илме сыпăнасси яланах совет патриотизмĕн хăватлă демонстрацийĕ, халăх Ленин—Сталин партине юратнине, вăл большевиксен партийĕшĕн тăнине кăтартса параканскен демонстраци пулса тăрать.

Совет государствин кăларакан заемсемпе ССР Союзăнчи ĕçсыннисем анлăн интересленни çак заемсем халăх ĕçне, коммунизм ĕçне усă кӳрнинчен килет. Совет государствин аллинчи пит пысăк финанс ресурсĕсем, çав хисепрех заем сарнипе пухăнакан укçа-тенкĕ те, халăх хуçалăхне аталантарма, çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетме тата ĕçсыннисен культурăллă виçине ӳстерме кайса пыраççĕ.

Государство заемĕсене кăларас ĕç аталанса пыни хамăран çĕршыври социализм строительствин пĕтĕм ĕçĕсемне таччăн сыхăнса тăрать. Пирвайхи заема хуçалăха ура çине тăратса пынă тапхăрта кăларнă,—унчухнехи вăхăтра Совет Союзĕ, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, халăх хуçалăхне, ютçĕршыв интервенцине тата граждан вăрçине пула юхăннă хуçалăха, ура çине тăратма тытăннă.

Çав вăхăтранпа пĕрмаях государство заемĕсем тăван çĕршывăн экономикăллă тата оборонăллă вăй-хăватне тĕреклетме совет государстви татах хуçса укçа-тенкĕ илсе тăракан çăлкуç пулса тăраççĕ.

Пирĕн заемсен ячĕсем хăйсемех вĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен каласçĕ — Индустриализаци Заемĕ, «Пятилеткăна—тăватă çулта» заем, Иккĕмĕш Пятилетка Заемĕ, Виççĕмĕш Пятилетка Заемĕ. Çак ятсем — боевой лозунгсем, —çак лозунгсемпе Ленин—Сталин партийĕ хамăран çĕршыва çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ патне илсе пычĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заема сарнин, — ку заем тăрăх нумай пулмасть подписчиксемпе расчет туса пĕтернĕ,—çак заема сарнин итогĕсем совет çĕршывĕнче Государство заемĕсем аталанса пынин историйĕнче çĕнĕ те чаплă страница пулса тăрать. Çак заема илме 60 миллион çынна яхăн — 9 миллиард та 433 миллион тенкĕлĕх çырăннă. Нумай та пулмасть вĕт, вунă çул кăна каялла, «Пятилеткăна — тăватă çулта» Заема кăларсан, заем илме 12 миллион çын çырăннă, подписка суммине пĕр миллиард тенкĕрен кăшт кăна ытларах пулнă.

Вунă çул хушшинче заем илме çырăннисен хисепĕ пилĕк хут, подписка суммине вунă хут ӳсрĕ. Çапла ĕнтĕ Совет государствин заемĕсене туянакансен хисепĕ çултан çулах йышланса, ĕçсыннисем заем илме çырăннин пысăккăшĕ унтан та хăвăртрах ӳссе пырать.

Заем çултан-çулах ытларах сарăлни çĕршывăн халăх дохочĕ ӳссе пынин никĕсĕ çинче, рабочисемпе служащисен ĕçукçи тата колхозниксен дохочĕсем ӳссе пынин никĕсĕ çинче пулса пырать. Виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче халăх дохочĕ 1937 çулта 96 миллиард тенкĕ пулнинчен иртнĕ çулта 125,5 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 30 процент ӳснĕ, хуçалăхăн виççĕмĕш пятилетка тăрăх паларăнтă отраслисенче ĕçукçи фончĕсем çак вăхăт хушшинчех, 82,2 миллиард тенкĕ пулнинчен 123,7 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 1,5 хут ӳснĕ; колхозниксем укçан илнĕ доходсем 1937 çулта 14,2 миллиард тенкĕ пулнинчен 1939 çулта 18,3 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 30 процент ӳснĕ.

Çак вăхăт хушшинчех ĕçсыннисем Государство заемĕсене илме çырăнни мĕн чухлĕ ӳснĕ-ха. 1937 çулта рабочисемпе служащисем тата хулари мĕнпур халăх 4 миллиард та 186 миллион тенкĕлĕх заем çырăнса илнĕ, иртнĕ çулта — 7 миллиард та 830 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ, урăхла каласан, вĕсем заем илме çырăнни 90 процент ӳснĕ. Заема ялта вырнаçтарасси тата пысăкрах хăвăртлăхпа ӳссе пырать: 1937 çулта колхозниксем тата хресчен-единоличниксем заем облигацийĕсене 746 миллион тенкĕлĕх илнĕ, 1939 çулта —1 миллиард та 138 миллион тенкĕлĕх, ӳсĕм — 52 процент пулнă; иртнĕ çулта вĕсем заем облигацийĕсене 1 миллиард та 603 миллион тенкĕлĕх илнĕ, 1937 çултипе танлаштарсан, ӳсĕм 115 процент пулнă.

Çак цифрăсем рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ çине тăрса ĕçленипе кăна та мар, тата хăйсен укçи-тенкипе те социализмлă тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетсе пыма хĕрӳллĕн тăрăшнине кăтартса параççĕ. Сталинла пятилеткăсенчи халăх хуçалăхĕн аслă планĕсене пурнăçа кĕртес çĕре совет халăхĕ хăйĕн укçи-тенкипе хаваласкан хутшăнать. Заем кашни çулленех малтан кăларнă суммăран ытларах сăпăлать,—çак факт пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен хаваслăхне уçăн кăтартса тăрать.

1937 çулта ССР Союзĕн Оборонине Тĕреклетмелли Заема 4 миллиард тенкĕлĕх кăларнă, ăна ĕçсыннисем 4 миллиард та 932 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. 1938 çулта Виççĕмĕш Пятилетка (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Заема 5 миллиард тенкĕлĕх кăларнă, подписка 5 миллиард та 928 миллион тенке çитнĕ. 1939 çулта Виççĕмĕш Пятилетка (иккĕмĕш çулхи кăларăм) Заема 7 миллиард та 637 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ,—ку заема 6 миллиард тенкĕлĕх кăларнă пулнă. Иртнĕ çулта, ун çинчен малалăхрах калаçнăччĕ, Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заема ĕçсыннисем 9 миллиард та 433 миллион тенкĕлĕх çырăнса илчĕç, — ку заема 8 миллиард тенкĕлĕх кăларнă пулнă.

Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче Совет государстви халăхран 45,6 миллиард тенкĕ кивçен илчĕ, вăл хисепре пĕрремĕш пятилеткăра — 5,9 миллиард тенкĕ, иккĕмĕш пятилеткăра — 19 миллиард тенкĕ, виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче — 20,7 миллиард тенкĕ.

Çак суммăсен пĕлтерĕшне уçăн курас тесен, вĕсене капитальнăй ĕçсене валли халăх хуçалăхне хывнă укçатенкĕ хисепĕпе кăна танлаштарса пăхмалла,—капитальнăй ĕçсене тума халăх хуçалăхне пĕрремĕш пятилеткăра 51 миллиард тенкĕ, иккĕмĕш пятилеткăра — 115 миллиард тенкĕ, виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче — 108 миллиард тенкĕ хывнă. Çапла ĕнтĕ заем сарнипе пухăннă укçа-тенкĕ хисепĕ пĕрремĕш пятилеткăри капиталовложенисен пĕтĕм сумминче 11 процент ытларах, иккĕмĕш пятилеткăра 17 процента яхăн, виççĕмĕш пятилеткăн иртнĕ виçĕ çулталăкĕ хушшинче 19 процент ытларах пулнă.

Çак цифрăсен пĕлтерĕшĕ пит пысăк, —вăл ĕнтĕ курăнсах тăрать. Вĕсем çакăн çинчен каласçĕ: сталинла виççĕмĕш пятилетка çулĕсенче кашни пилĕк заводран пĕрине, кашни пилĕк фабрикăран пĕрне, кашни пилĕкмĕш çĕркăмăк шахтине, нефть вышкине, кашни пилĕкмĕш шкула, больницăна государство заемĕсем тăрăх пухăннă укçа-тенкĕпе туса лартнă. Хăйĕн укçи-тенкипе социализмлă государствăна кивçен паракан совет патриочĕ кашниех çак цифрăсене курса хĕпĕртесе савăнать.

Çапла ĕнтĕ, ССР Союзăнчи ĕçсыннисем государство заемĕсем туянса государствăна кивçен паракан укçа-тенкĕ çĕршывăн обществăллă пуянлăхне ӳстерме, культурăна çĕклеме, ĕçсыннисен материаллă пурнăçне лайăхлатма, çĕршывăн экономикăллă тата оборонăллă вăй-хăватне тĕреклетме пулăшать.

Анчах заемсем халăха усă пани ку çеç мар-ха. Совет государствин кашни çулленех заемсем тăрăх выигрышсем, процентсем пысăк сумма тӳлет. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче ĕçсыннисем заемсем тăрăх выигрышсем тата процентсем — облигаци хакне те пĕрле шутласан — 7,1 миллиард тенкĕ, çав хисепре иртнĕ çултан кăна 900 миллион тенкĕ ытла илнĕ.

Социализм строительствин пур тапхăрĕсенче те государство заемĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнă. Хальхи вăхăтра, тĕнчери лару-тăру кăткăс чухне, заемсен вырăнĕ уйрăмах пысăк. Çак пĕтĕм тĕнчери лару-тăру пире хыттăнах çапла хушать: пирĕн халăх хуçалăхĕ хăйне уйрăм хуçалăх пулса ĕçлессине тата капитализмлă йĕрисемпе тавралăхран килсе тăмалла мар тăвассине, капитализмлă хуçалăхран, уйрăмăнах металлургипе машиностроени тĕлĕшпе, килсе тăмалла мар тăвассине çирĕплетсе пымалла. Пирĕн халăх хуçалăхĕн отраслисенче пуринче те социализмлă производствăна мĕнпур вăйпа аталантарса пымалла, халăх хуçалăхĕнче диспропорци пулма памалла мар, прорыв пулма пултарассине государствăн çĕнĕ резервсене ӳстерсе тата туса пынипе сирсе пымалла.

Халăх хуçалăхĕн кăçалхи планне, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ырланă плана, çак задачăсене пурнăçа кĕртессине шутра тытса тунă. Большевиксен партийĕ, Совет правительстви тата аслă Сталин таврапĕтĕçсе тăракан пĕтĕм совет халăхĕ çак плана — коммунизм çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пымалли плана — пурнăçа кĕртессишĕн тата ирттерсе пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ.

Кăçалхи плана пурнăçа кĕртме пит нумай укçа-тенкĕ кирлĕ. ССР Союзĕн Государство бюджечĕ тăрăх кăна расходсем 216,1 миллиард тенкĕ пулаççĕ, ку хисепрен халăх хуçалăхне валли 73,2 миллиард тенке яхăн, социалăлă-культурăллă мероприятисем валли 47,9 миллиард тенке яхăн памалла тунă, 70,9 миллиард тенкĕ хамăрăн çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерме каять.

Хăйне кирлĕ укçа-тенке пĕтĕмпех совет государстви çĕршыври шалти ресурссенчен илсе тăрать, ютçĕршывсенчен кабальнăй кредитсемпе заемсем илмест. Государство бюджетĕнчи доходсенче социализмлă промышленностăн, транспортăн, суту-илӳн тата ялхуçалăхĕн накопленийĕсем чи пысăкрах вырăн йышăнса тăраççĕ.

Государствăн кăçалхи бюджечĕ тăрăх халăх хушшинче подпискăпа саракан заемсенчен те 10 миллиард та 475 миллион тенкĕ пухăнмалла палартса хунă. Çапла ĕнтĕ сталинла виççĕмĕш пятилеткăн тăваттăмĕш çулĕнче государство заемĕсем партин XVIII конференцийĕ хамăрăн çĕршыв умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртме татах хушса укçа-тенкĕ пухмалли чылай пысăк çăлкуç пулса тăраççĕ.

Чĕпĕсене пăхса ӳстересси

Колхозсене акмалли çĕр лаптăкĕшне кура государствăна обязательнăй йĕркепе çăмарта памалла туни кашни колхозрах чăх-чĕпсем усрама кирлине уçăнах кăтартса парать. Партипе правительство кăтартăвĕсем кашни колхозрах кайăк-кĕшĕк фермисем организацилеме хушаççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсенче кайăк-кĕшĕксем усрама условисем çителĕклĕ. Инкубатор станцийĕсем чăх-чĕпсем кăларса колхозсене пысăк пулăшу параççĕ. Çавăн пекех колхозсем хăйсем те чăх, хур, кăвакал тата кăркă чĕпписене кăларма пултараççĕ. Кайăк-кĕшĕксем усрани колхозсене пысăк тупăш парать, ку ĕçе тĕрĕс организацилени кăна кирлĕ.

Кайăк-кĕшĕксем ĕрчетес пулсан, вĕсене усрамалли витесене малтанах хатĕрлесе хурас пулать. Кайăк-кĕшĕксен чĕпписене пăхса усрамалли çуртĕрсем çук пулсан, пушă çуртсемпе усă курмалла. Çынсем пурăнман пушă çуртсем кашни колхозрах пур.

Колхозсенче кайăк-кĕшĕксем усрама çутă тата ăшă витесем уйăрас пулать. Кăнтăр енне е кăнтăр-хĕвелтухăç енелле пăхса ларакан вите уйăрсан пит те аван пулмалла. Вăл çуртăрсене малтан тĕплĕн юсас пулать, тĕрлĕ çӳп-çапсенчен тата тусанран тасатмалла. Çуртĕрсен стенисене извеçпе шуратмалла. Уйăне сарман пулсан тикĕслесе хытармалла, хăма сарнă уйăне çуса тасатни кирлĕ, вара дезинфекци тумалла. Кайăк-кĕшĕксен витинче типĕ пулни лайăх, мĕншĕн тесен, чĕрĕ сывлăш вĕсене чирлеттерме пултарать. Кайăк-кĕшĕксене пурăнмалли çуртĕрсем вылăх-чĕрлĕх фермисенчен инçерех пулмалла.

Кайăк-кĕшĕксене усрамалли витере кашни тăваткăл метр пуçне 15—16-шар чĕпĕ вырнаçтарма юрать. 45 кун çитмен чĕпсене уйăрмăнах ăшă витере усрамалла. Çавăнпа витере кăмакасем е ăшăтмалли уйăрăм хатĕрсем кирлĕ. Кирпĕчрен тунă кăмака та юрать.

Кайăк-кĕшĕксен вити пĕчĕккĕ пулсан, унта пĕр кăмака кăна тăваççĕ. Витере 18—20 градусран кая мар ăшă пулмалла.

Вите уйăне ăшăтма тата витене тасатас тытас тĕлĕшпе чĕпĕсен айне турană улăм е типĕ торф сармалла. Çирĕм кунран иртнĕ чĕпĕсен айне типĕ пăчкă кĕрпи е хăйăр сарма та юрать.

Кайăк-кĕшĕксене тĕрĕс, пĕр тикĕс ӳстерсе çитĕнтерес тесен, вунпилĕк кун иртсен лайăх çанталăкра уçăлтарса çӳреме илсе тухмалла. Пирвайхи хут 10—15 минутлăха кăлармалла, унтан вара ерипен ӳстерсе пымалла. Хурпа кăвакал чĕпписене çирĕм-вăтăр куна çитсен шывра иштерме пуçламалла.

Кайăк-кĕшĕк чĕпписене усрама хатĕрленĕ витесенче апат памалли хатĕрсем, кормушкăсем тумалла. Пĕр кунтан пуçласа 8—10 куна çитичченех чĕпĕсене апат пама ик енчен хăма çапса тунă хатĕрсемпе усă курмалла, икĕ ярнерен иртнĕ чĕпĕсене таканасем çине апат памалла. Таканасемпе кормушкăсем чĕпĕсене пурне те пĕр вăхăтра çитерме кирлĕ чухлĕ хатĕрлемелле. Чĕпĕсене ăшă шыв ĕçтермелле, шыв памалли хатĕрсене яланах таса тытмалла.

Чĕпĕсене çитермелли апат пахалăхне сăнаса тăрас пулать. Рациона тĕплетмелле, витаминлă, минераллă апатсем т. ыт. пулмалла. Чĕпĕсене пурне те тĕплетмелле çитерме юрать. Чĕпĕсене ыраш çитерме юрамасть. Вĕсене инкубатор станцинчен фермăна илсе пынă хыççăн кăна апат çитерме тытăнас пулать.

Чи пирвайхи чĕпĕсене йӳçнĕ сĕт е тулă çăнăхĕн алланчăкне çитерсен аван. Малтан пуçласа апат çитернĕ чух ала витĕр кăларнă вĕтĕ çиммĕçсене памалла. Пирвайхи вунă кун хушши кашни чĕпĕ пуçне 6—8 грамм тĕттырă кирлĕ, иккĕмĕш вунăкунлăхра 13—15 грамм, виççĕмĕш вунăкунлăхра — 24—30 грамм вĕтĕтнĕ тĕттырăсем кирлĕ. Çак виçепе чĕпĕсене таса хăмасем çине сапса парса 5—6 хутчен апат çитермелле.

Чĕпĕсене уйран, чăкăт, сĕт, сикмен чирпе чирлесе вилнĕ чĕрчунсен какайне çитерме те юрать. Чĕпĕсене шапа тата шапа хуранĕ çитерни питĕ усăллă.

Витаминлă апатсенчен çамрăк вĕлтрен, люцерна, клевер, хĕрлĕ кишĕр т. ыт. çитермелле. Ирĕке илсе тухса курăксем çитерес пулать. Чĕпĕсене курăк çитерни кирлĕ, унсăрăн вĕсем тĕрлĕ чирсемпе чирлеме пултараççĕ. Чĕпĕсем валли йывăç кăмрăкĕ, таса шыв, хăйăр, вĕтĕ чул яланах пулмалла.

Пирвайхи виçĕ ярнерне чĕпĕсене кунне 5—6 хутчен, тăватă ярнерен пуçласа çиччĕмĕш ярнене çитиччен 4 хутчен апат çитерсен аван. 45 куntан пуçласа 60 куна çитнĕ чĕпĕсене усрама уя илсе тухмалла. Клевер тата люцерна акнă уйсенче усрани усăллă. Тырпулсене пухса кĕртнĕ хыççăн, чĕпĕсене хăмăл çинче усрамалла. Чĕпĕсене уя куçса çӳрекен пĕчĕк йăвасенче илсе тухмалла. Вăл йăвасене тӳсĕмлĕ тăвас шулать.

Чĕпĕсем мĕнле çитĕнсе пынине пĕрмаях сăнаса тăнă кирлĕ. Начар ӳсекен чĕпĕсене уйăрăм группăсене пухмалла, вĕсене лайăхрах тăрантармалла.

Кайăк-кĕшĕксен чĕпписене лайăх пăхса усрани кирлĕ. Уйрăмăнах вĕсен витисене таса тытас пулать, тислĕке кашни кун тасатмалла. Айне сарнă улăма, торфа е хăйăра виçĕ кунта пĕр хут улăштармалла.

Чĕпсене лайăх пăхса усрасси вĕсене пăхакан кадрсенчен килет. Райçĕрĕç пайĕсен тата колхоз председателĕсен кайăк-кĕшĕксене, чĕпсене пăхакансене тĕплĕн хатĕрлемелле. Кашни фермăрах чĕпсене вĕсене пăхакансем çумне яланлăхах çирĕплетес пулать. Кайăк-кĕшĕксене лайăх пăхакансене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен ăнлантармалла.

«Красный флот» колхоз (Шупашкар р.) кайăк-кĕшĕксене пăхса усрас тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçлет. Вăл колхоз иртнĕ çулта инкубатор станцинчен 250 чĕпĕ илнĕ, вĕсенчен 220 чĕпĕ пăхса çитĕнтернĕ. «Красный бригадир» колхоз (Çĕрпӳ районĕ) 127 чĕпĕрен 120 чĕпĕ пăхса çитĕнтернĕ. Çак колхозсем кăçал та чĕпсене кĕтсе илме хатĕрленсе çитнĕ.

Райçĕрĕç пайĕсен, зоотехниксемпе ветеринари работникĕсен малта пыракан колхозсен опычĕсене анлăн сарса пымалла. Колхозсене кайăк-кĕшĕксем усрас ĕçре пулăшмалла. Кашни колхозрах кайăк-кĕшĕксем усрас пулать.

К. ПАВЛОВА.

УЙРА

«КИМ» колхоз бригадирĕ Матвей Мышкин 2—3 кун хушши канлĕн çывăрман. Çанталăк йĕркеленсе çитейменни пăшăрхантарнă ăна. Хăш кунхине ир пуçласа кăçчен пĕр чарăнмасăр çăмăр çунă, тепĕр кун питĕ вăйлă çил пулнă, çавăнтах хĕвел пăхма пуçланă, анчах нумайăха мар, ăна çăмăр пĕлĕчĕсем татах хупласа илнĕ.

Мышкин юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада икĕ кун хушши ĕнтĕ ыттисенчен кая юлса пынă.

Майăн 10-мĕшĕнче, кăвак сутă килме пуçланă пуçламанах, çурçĕр иртсен иккĕмĕш сехетре Мышкин юлташ хăй бригадине уя илсе кайнă.

— Кая юлса намăс курмастăп, — тенĕ вăл. Ытти бригадăсем те васкаса çав сехетрех уя кайнă.

Çанталăк паян чăнах та калама çук аван.

— Эх, малтанхи кунсенчех çакăн пек аван çанталăк тăнă пулсан, эпир çуракине паянхи кунччен тăсман пулăттăмăр, — тет колхоз председателĕ Н. Софронов юлташ.

Акă кунта 4-мĕш бригада ĕçлет.

— Ĕç пит аван пырать. Çакăн пек куна эпир тахçанах кĕтнĕ. Çĕр çийĕ типсех çитмен-ха, анчах сухалама юрать.

Агротехник Рыбкин юлташ нӳрлĕ çĕре ывăçпа илсе чăмăртать те аллине хăй çӳллĕш çĕклесе тăпрана çĕре пăрахать, чăмăкка тунă пĕр ывăç тăпра ӳксенех саланса каять.

— Анасене сухалама вăхăт çитнине çапла тĕрĕслеме хушатчĕç пире шкулта,—тет вăл кулкаласа. — Тăпра саланчĕ, значит сухалама ир мар, вăхăт çитнĕ,—хушса хурать вăл тепĕр ывăç тăпра чăмăртаса.

Культиваторсем хыçĕнчен Хлебниковпа Козлов юлташсем пыраççĕ, Самаринпа Зайцев юлташсем сӳре сӳрелеççĕ, И. Бабочкин юлташ сеялкăпа тулă акать. Вăрлăха лайăх тасатнă, пĕр пĕрчĕ çӳпĕ те çук. Вăл кăшт кăна шӳнĕ пек, акачченех «сăмсаланнă».

Тăрăшса ĕçлет бригада. Пĕр-пĕринпе чăмартса ĕçлеççĕ, каласса тăма вăхăт çук.

— Çанталăк лайăх тăнă вăхăтра авантарах ĕçлес пулать, — тет бригадир.

Çак бригадăра малтан бригадир пулса кахалсем ĕçленĕ. Ĕçлеме ир тухман, тухсан та уйра ытларах канма юратнă. Çапла 3 кун хушши ĕçлекеленĕ хыççăн, вĕсене пухура ятланă та ĕçрен хăтарнă. Бригада вĕсем кайсанах ыттисене хăваласа çитме пуçланă. Халĕ ĕнтĕ ыттисенчен иртсе кайма тăрăшаççĕ.

Вĕсенчен инçех те мар 3-мĕш бригада ĕçлет. Ефим Мышкин акма ăста, вăл сеялка хыçĕнчен сăнаса пырать, культиваторпа ĕçлекенсем А. Шавкинпа К. Зайцев юлташсем те хăйсен ĕçне аван пĕлеççĕ, питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. А. Шавкин юлташ — допризывник. Хĕрлĕ Çара кайиччен ытларах ĕçлесе хăварма тăрăшать вăл. Сӳрелекенсем А. Тихоновпа С. Воробьев пĕр шайрăк хăвармасăр, лайăх сӳреллеççĕ.

Савăнтарать, чĕрене çĕклентерет ушкăнлă ĕç. Юрласа ĕçлеççĕ стахановецсем. 1-мĕш бригада нормăна 180—200 процент тултарать. Унăн бригадирĕ Н. Уральский обществăллă ĕçре те лайăх ĕçлет.

Н. Горбунов юлташ бригади те (2-мĕш бригада) ыттисенчен кая юлса пырастăн мар, унăн бригадинче ĕçлекен стахановецсем А. Лаврентьев, В. Пыркин, С. Бабочкин тата Ериков юлташсем ĕçе тĕлĕн тăваççĕ. Бригада хăйĕн нормине кашни кунах 190 процент тултарать. Лашасем пурте мăнтăр. «КИМ» колхоз кашни çулах выльăх апачĕсене вăхăтра çителĕклĕ хатĕрлесе хурать.

— Запас çитмелле-ха пирĕн, — тет колхоз председателĕ Н. Софронов юлташ, — фуражран эпир нихăçан та аптраман.

...Тепĕр ана тăршшĕ çеç каймалла, унта единоличниксем сухалаççĕ.

Паян куна колхоза кĕмесĕр 21 хуçалăх юлнă.

Акă Г. Зайцев лашисене кантарма тăратнă, хăй те канать пулмалла.

Пĕр енче, пĕр метр сарлакăш çул урлă çеç, малта пыракан колхозăн илемлĕ уйĕнче вĕллери пек ушкăнлă ĕç вĕрет, кĕркунне сĕртме лайăх туса хăварнипе, анасем кăпăк пек çемçе, вăрлăхсем таса та шултăра, вылăхсем мăнтăр, машинăсем çирĕп те таса, сӳсменсем çирĕп, сыннисем сывлăхлă та савăнăçлă. Çулăн тепĕр енче единоличниксем; кĕркунне лайăх сухаласа хăварманнипе, вĕсен анисем хытса ларнă, лашисем начар, вăрлăхĕсем çӳпĕ-çапăллă, йĕркеллĕ тасатман вĕсем вăрлăхсене.

— Вăрлăхсене кирлĕ таран тасататпăр, протравить тăватпăр тесе, мана сăмах патăр вĕт эсир, ма авантарах тасатмарăр?, — тесе ыйтать вĕсенчен ялсовет председателĕ Д. Бабочкин юлташ.

— Тасатрăмăр эпир, унран ытла тасатма çук ĕнтĕ ăна, — тет вăтанса Г. Зайцев.

Çак вăхăтра ял енчен И. Сверчков тата В. Бабочкина единоличниксем вăрлăх йăтса пычĕç, вĕсен те вăрлăхсем çителĕклĕ таса мар.

— Эх, хăвăр теттĕм пиркиех çĕре сая яратăр, — тет агротехник Н. Рыбкин юлташ пуçне сулласа. — Плугне те çиелтен çеç шайăрттарса пыраççĕ.

Пĕччен ĕçĕн йывăрлăхне вĕсем темшĕн халĕ те ăнланса илмеççĕ. Ав, çулăн леш енче коллективлă ĕç кĕрлет. Çав ĕçе хутшăнас пулать, Сверчков юлташ!

С. ЯЛАВИН.

Елчĕк р.



Укерчĕк çинче: «Трактор» колхозри (Комсомольски р.) 1-мĕш бригадăри 4-мĕш звено звеновочĕ Фадей Андреев сеялка патĕнче
Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Графиксăр ĕçлекен предприятие

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленность ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă решенисем йышăнчĕ. Конференци плана предприяти тăрăх, вăтамран илсе çеç мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра хисеп тĕлĕшĕнчен те, пахалăх, комплект тата ассортимент тĕлĕшĕнчен те тултарма кирлине кăтартса пачĕ. Партконференци пулнăранпа 3 уйăх ытла иртрĕ. Çак хушăра предприятисен ĕçĕсене, конференци йышăннă решенисене кăтартăк пек, урăхлатса çĕнетме вăхăт пулнă.

Çапах та уйрăм предприятисем конференци йышăннă решенисене пурнăçа начар кĕртсе пыраççĕ. Çĕмĕрлери «Труженик» завод 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне 73 процент кăна тултарчĕ. Завод ассортимент енĕпе те плана тултарман. Ку таринченех хурт вĕллисем, йывăç урапасем, этажеркăсем, кĕреçесем, линейкăсем кăларма тытăнман.

Уйрăм цехсен ĕçĕсене илсе пăхсан, çакăн пек картина курма пулать. Ултă цехран пĕр бондарнăй цех кăна плана 147 процент тултарнă. Фанера туса кăларакан цехăн план тăрăх 595 кубометр фанера туса кăлармалла пулнă пулсан, вăл 168 кубометр кăна туса кăларнă. Ку цехăн икĕ сменăпа ĕçлемелле пулнă. Анчах вăл чĕртавар çитмен пирки пĕр сменăпа кăна ĕçленĕ.

Апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа çак цех икĕ сменăпа ĕçлет. Анчах плана пурнăçласа пымасть. Туса кăларнă фанерăна типĕтме пăс çителĕксĕр, çавăнпа та фанера 10-шар кубометр пухăнса выртать, пăсăлать.

Стружка тăвакан цех пĕрремĕш кварталта 80 тонна стружка туса кăлараймаи. Мĕншĕн тесен, кунта станоксем пурте ĕçлемеççĕ. Цехри чи лайăх станок 3 уйăх ĕнтĕ ĕçлемесĕр тăрать.

Сĕтел-пукан тăвакан цех та çителĕксĕр ĕçлет, вăл пĕрремĕш квартала 68,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлараймаи. Кунта чылай вăхăт хушши фанерăран тунă вăлашка кăларса тăнă. Халĕ çак вăлашкасене те, чемодансене те туса кăларма чарăннă.

«Труженик» завод пĕтĕм продукцине йывăçран туса кăларать. Çавăнпа та унăн ĕçне чи малтан вăрман татса парать. Вăрмана вăл хăй хатĕрлет. Анчах завод вăрман хатĕрлес планне тултарайман. Заводăн 8 пин кубометр таран йывăç касмасăр юлнă, 5 пин кубометр каснă йывăçа турттарайман. Хатĕрлесе хунă йывăç июнь уйăхĕчен ĕçлеме кăна çитет.

Завод апрельри производствăллă плана тултарнă хушăрах, фанера тăвакан цех кăна хăйĕн планне 85 процент çеç тултарчĕ. Ассортимент енĕпе халĕ те план тулса пымасть.

Завод халĕ те кивĕлле ĕçлет. Унăн малтанах туса хатĕрленĕ çирĕп график çук. Цехсем плансăр ĕçлеççĕ, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырать. Завод руководителĕсем графикпа ĕçлессине хăйсем майлă ăнланаççĕ. Вĕсем квартал планне виçĕ пая пайлаççĕ те, вара ăна уйăхри график вырăнне шутлаççĕ. Кашни кун график тăрăх ĕçлесе пымаллине ăнланмаççĕ. Цех начальникĕсем кашни кун мĕн чухлĕ продукци туса кăлармаллине пĕлмеççĕ. Паллах, çакăн хыççăн предприяти руководителĕсем производствăри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пыма пултараймаççĕ.

ВКП(б) XVIII конференцийĕ продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах чакарса пымаллине кăтартса пачĕ. «Труженик» заводра çак кăтартăва пурнăçласа пымаççĕ. Предприяти ĕçĕнче тăвакăсем нумай. Пĕрремĕш квартала 28 пин тенкĕлĕх ытлашши топливо çунтарса янă. Çавăнпа та ĕнтĕ продукцин хăйне ларакан хакĕ чакса пырас вырăнне, хăпарса пырать. 1941 çулти пĕрремĕш квартална продукцин хăйне ларакан хакне 3,7 процент чакарас вырăнне 6,07 процент хăпартса янă. Иртнĕ çулта та продукцин хăйне ларакан хакĕ 10 процент хăпартнă пулнă.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ çине, çичĕ кунлă ĕç эрни çине куçасси тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайма чарасси çинчен» 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа пурнăçа кĕртни ĕç дисциплинине чылаях çирĕплетнĕ. Анчах прогулсем пĕтмен-ха. 1941 çулта 31 прогул тата хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнисем 5 пулнă.

Предприятире тасалăх тата элементарлă йĕркелĕх çукки те производствăна пысăк чăрмав кӳрет. Предприяти территорине йĕркелĕх çук, пур çĕрте те йывăç сапаланса выртать. Туса хатĕрленĕ продукцин, уйрăмах катка пичке хăмисем ăçта-кирлĕ унта, уçă çĕрте сапаланса выртаççĕ, çĕреççĕ, кăвакараççĕ, пăсăлаççĕ. Предприяти территоринчи çӳп-çапсене пуçтарса пымаççĕ. Фанера, катка-пичке, стружка тăвакан цехсем çӳп-çапсемпе туласа ларнă. Рабочисем ĕç вырăнĕсене таса тытмаççĕ, оборудованисем, инструментсем тутăхаççĕ. Тасалăх, культурăлăх çинчен кашни пухура, канашлура пекех калаçаççĕ, анчах тасалăх тата элементарлă йĕркелĕх туса хурас тĕлĕшпе ĕçлени çук.

Предприятире единоначалине татăклăнах çирĕплетсе пыни палăрмасть. Предприяти руководителĕ Кротиков юлташ кăларнă распоряженисем пурнăçа кĕрсе пымаççĕ. Вăл хăй те приказсене кам мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пымасть. Кунта кадрсен енĕпе те ĕçсем начар.

Предприяти ĕçĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явaççĕ, решенисем йышăнаççĕ. Анчах пуху йышăннă решенисене пурнăçланине пачах тĕрĕслемеççĕ. Пуçламĕш парторганизаци питех те çителĕксĕр ĕçлет. Кăна отчетпа сӳлав пухăвĕ те лайăх кăтартса пачĕ. Чылай коммунистсем (пĕтĕмпе 12 коммунист) марксизм-ленинизм никĕсĕсене куллен вĕренсе пымаççĕ. Агитаторсем рабочисене партипе правительство решенисене, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене ăнлантарса памаççĕ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕ конференци хыççăн та предприятисен ĕçне тĕплĕн сăнаса пăхмасть, предприятисен ĕçне час-часах çнелтен тĕрĕслесе конкретлă мар решенисем йышăннипех ирттерсе ярать. Кăна «Труженик» завод примерĕ çинче кăтартма пулать. ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Овтин юлташ кĕске вăхăт хушши заводра пулнă та, сведенисем пухнă. Предприяти ĕçне çакăн пек çнелтен кăна тĕрĕсленĕ хыççăн, ку ыйтăва ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче сӳтсе-явнă, анчах пратконференци йышăннă решенисене мĕнле пурнăçлани çинчен пĕр сăмах та каламан. Райком бюровĕ предприяти ĕçĕнчи ситменлĕхсене регистрацилене кăна.

«Труженик» завод графиксăр ĕçлет, унăн чĕртавар çителĕксĕр, инженерно-технически кадрсем çук, пуринчен малтан технорук кирлĕ. Райком, паллах, çак ыйтусем патĕнчен иртсе кайма пултараймасть.

Парторганизацисен предприятисене ячĕшĕн кăна ертсе пырассине пĕтермелле. Предприятисен ĕçне тĕплĕн сăнаса вĕренмелле, руководительсен ĕçне куллен тĕрĕслемелле, вĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене палăртса, çав ситменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшмалла.

П. П.

Колхозниксем çĕнĕ пӳртсем тăваççĕ

Турткуль районĕнчи колхозсем (Кара-Калпак АССР) илемлĕ те лайăх поселоксем тăваççĕ. «Бричи Намуна» колхоз кăçалхи çул 150 пӳрт тăвать.

Молоков ячĕпе тăракан колхоз 340 пӳртлĕ пысăк поселок тăвать. Илем кӳрекен йывăççисемпе улма-çырла йышăççисем лартса тухнă анлă урамсем хĕрринче 40 çурт ӳссе те ларнă ĕнтĕ. Поселокра 14 гектар çинче парк-сад сарăлса выртать. Унăн аллейисем хушшинче колхозри ресторан ларать, хĕрлĕ чайхана, библиотека-читальня, ачасен площадки туса çитереççĕ. Парка радио кĕртнĕ.

Таллинри çĕнĕ музейсем

Советлă Эстони столицинче — Таллинра этнографи музейĕ уçăлать. Унта авалхи хресченсен çуртĕрĕсене — пурăнмалли пӳрте, армана, амбара тата ыттисене те кăтартса параççĕ. Искусство ĕçĕсен управленийĕ çывăх вăхăтра театрпа музыка музейĕсене уçма палăртать. Естественно-научнăй музей уçăлать.

Историпе революци музейĕнче Эстонире тухнă коммунистла хаçатсемпе листовкăсене, Эстони пролетариачĕ хăйĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешнинне кăтартса паракан ытти материалсене халăха кăтартма кăларса тăратаççĕ.

Историллĕ хаклă памятнике — Петр I пӳртне ремонтлаççĕ, вăл çывăхри вăхăтрах уçăлмалла.

Осоавиахимовецсен — тинĕс-çар ĕçĕн руководителĕсен сборĕ

Майăн 13-мĕшĕнче Тушинора (Мускав облаçĕ) тинĕс-çар клубĕсен, отделсен руководителĕсен, Осоавиахимăн тинĕс-çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен командир-инструкторĕсен вĕренӳпе методика сборĕ уçăлнă.

Иртнĕ çулта осоавиахимовецсем шлюпкăсем çинче 557 поход тунă, çав походсене 15.937 çын хутшăннă. Мускавра, Ленинградра, Архангельскра, Одессăра, Ригăра, Пярнура, Каунасра, Аккерманра, Выборгра тата пирĕн çĕршыври ытти хуласенче те тинĕс-çар клубĕсене туса йĕркеленĕ. Тинĕс-çар ĕçне вĕренмелли 48 клубра «Моряк» значкисчĕсене 31 пин çын ытла, «Çамрăк моряк» значкисчĕсене 30 пин çынна яхăн вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Кашни ултăмĕш призывник — пилот

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн речĕсене тăма хатĕрленнĕ май, Запорожье облаçĕнчи çамрăксем çар специалноçĕсене ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ.

Осипенко хулинчи призывниксем чаплă ситĕнӳсем тунă. Кунта кашни ултăмĕш призывник пилот специальноçне илнĕ! Героиня-пилот Полина Осипенко ячĕпе тăракан аэроклуб çамрăк летчиксене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçленĕ.

Генически районра нумай призывниксем водолаз ĕçне вĕренсе алла илнĕ. Хăйсене вĕсем тинĕс-çар флочĕн речĕсене тăма хатĕрлеççĕ. Мелитополь районĕнчи Мордвински ялсоветра призывниксем пурте оборона значокĕсем тăватшар значок илнĕ.

ХĔРЛĔ ЯЛАВШĂН

Колхозăн сарлака та аслă уйĕсем çине каçхи тĕттĕм сăн çапсан тин тавраннăçĕ колхозниксем хĕрӳллĕ ĕçрен. Енер пĕрремĕшпе виççĕмĕш бригадăсем юлашки гектар акса яла таврăнчĕç.

Колхоз председателĕ Николай Самонов колхозниксемпе пĕрле уйран килчĕ. Вăл кашни сухаçă, кашни сеяльщик ĕçне тĕрĕсленĕ, темиçе хут та сеялкăсем, лашасем патне пырса сăнанă, пăхнă.

— Лайăх акнă, савăнмалла ĕç, — тет вăл хĕпĕртенипе.

Тепĕр куннех ир-ирех каллех хĕрӳллĕ ĕç пуçланнă. Кăнтăрлахи апат тĕлне иккĕмĕш тата тăваттăмĕш бригадăсем те тĕттырăсене акса пĕтернĕ. Пĕрремĕш тата виççĕмĕш бригадăсем çĕрулми лартма, вир, йĕтĕн акма, пахча-çимĕçсем лартма çĕр хатĕрленĕ.

Кăçалхи çуракинчи пек ĕçленине колхозра никам та астумасть. Çанталăк лайăх тăмарĕ: пĕрмаях çумăр çурĕ, уяр çанталăкра кашни минутăпа, сехетпе усă курмалла пулнă. Кунта çавăн пек тунă та. Çĕр пĕтĕм лаптăкĕпех типессе кĕтсе тăман, типерех панă — унта кĕрхи çĕртмене сӳренĕ, сухаланă, сеялкăпа акнă. Ун хыççăн тата тепĕр хут урлăн сӳреленĕ, çапла вара пĕрчĕсем çĕр айне тарăнрах пытанса пынă.

Колхозниксем сӳрелес, сухалас, акас ĕçсене пĕр вăхăтрах тунă. Кашни бригадăна, звенона панă çирĕп графика кунран кунах тултарнă. Колхозра 70 лаша, вĕсем пурте ĕçре, уйра. Икĕ сеялка кăна пулнă пулсан та ака ĕçĕ вăрăма кайман. Кашни сеялкăна ĕçлеме улттăр лаша уйăрнă, вĕсем кашни тăватă сехетрех улшăнса пынă.

Пĕрремĕшпе тăваттăмĕш бригадăсенче сеялкăпа Никандр Трофимов тата Иван Гаврилов акаççĕ. Вĕсем сеялки талăкра вунсакăр сехетрен сахал ĕçлемест. Вĕсем 7 гектар акас вырăнне 9—10-шар гектар акрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсенче сеялкăпа Михаил Алексеев тата Иван Галкин акаççĕ. Вĕсем те кашни кунах хăйсен нормисене ирттерсе тултарчĕç. Ĕçре сеялка пăсăлни пулман.

Сухалакансем те лайăх ĕçлесе пычĕç. 3-мĕш бригадăри Кузьма Ионов, Григорий Голубчиков ĕç нормине 120 процент таран тултарса ĕçлерĕç. Сӳрелекенсем Степан Кудряшов, Иван Степанов ултшар гектар сӳрелес вырăнне 10—11-шер гектар сӳрелесе пынă. 4-мĕш бригадăри Никандр Трофимов, Андрей Ефимов ĕç нормисене 130 процент, сӳрелекенсем — Михаил Филиппов, Анатолий Николаев 150 процент таран тултарса пычĕç.

Белофинсене хирĕç çапăçнă красноармеец, халĕ звеновод пулса ĕçлекен Григорий Илларионов, кашни кунах графика пурнăçласа, ĕç планне ытлашшипех тултарса пычĕ. Унăн звени Иван Гаврилов звенипе ăмăртса ĕçлет. Вăл та Илларионов звенинчен кая юлса пыман.

Ĕçе паха тата вăхăтра, тĕрĕс тăвассишĕн колхоз председателĕ, бригадир, звеновод çеç мар, пур колхозниксем те тăрăшаççĕ. Хĕлле колхозниксем стахановла шкулта вĕреннĕ, вĕсем хăйсем те малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртсен кăна пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пуррине ăнланаççĕ. Иртнĕ çулта колхоз вăтам шутпа гектартан 108 пăт тырă туса илсе районра мала тухрĕ. Колхоз кăçал пĕрремĕш хут Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ. Малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине кунта кашни колхозник, колхозница пĕлсе тăрать. Ун çинчен пухусенче ăнлантарса панипе лăпланман. Партипе правительство йышăннă постановленине кашни бригадăрах, звенорах ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем те колхозниксемех, ака, сӳре тăвакансемех. Агитаторсем вырăнти, колхозри фактсене илсе кăтартаççĕ. Вĕсем колхозниксене çывăх та ăнланмалла.

Бригадир комсомолец Николай Максимов колхозниксене хăйĕн бригади лайăх ĕçлесен мĕн чухлĕ тупăш илме пултарни çинчен питĕ ăнланмалла, лайăх çаларать. Колхозниксен пухăвĕ йышăннă тăрăх кăçал гектартан 15 центнер тĕттырă туса илмелле. Бригадăн кĕрхи тырăсем 34 гектар, çурхи тырăсем 33 гектар. План тăрăх çак лаптăкран пĕтĕмпе 1150 центнер тырă пуçтарса кĕртмелле. Бригада кашни гектартан 150 пăт тырă туса илессишĕн кĕрешет. Пĕтĕмпе 1925 центнер, планран ытлашши 770 центнер тырă илмелле. Çак тырăран тăваттăмĕш пайне колхозниксене валеçсе памалла. Çапла вара колхозниксем 192,5 центнер тырă ытларах илеççĕ. Е тата тепĕр пример. Иван Гаврилов звенинчи колхозниксем планран ытлашши 294,5 центнер тырă пуçтарса кĕртеççĕ. Çак тырăран 73,62 центнерне колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх хушса валеçсе параççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ халĕ колхозра пысăк çĕкленӳ. Кунта кахалсене, ĕçе начар тăвакансене хирĕç кĕрешеççĕ. Агротехник Чернов юлташ айĕпĕпе малтанхи кунсенче сеялкăсен нормисене туман пулнă. Уншăн ăна хытă критикленĕ. Сухаçă Петр Яковлев ĕçе çур сехет кая юлса тухнă. П. Яковлева звенора та, бригадăра та ятланă. Халĕ вăл хăй ĕçне лайăх туса пырать.

Колхоз председателĕ коммунист Николай Самонович Самонов бригадăсенче кашни кунах калаçусем ирттерет. Вăл колхозниксем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн каласа парать, начар ĕçлекенсене сивлет, лайăх ĕçлекенсенчен пример илме чĕнет.

Николай Самонович икĕ хутчен Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулнă. Унта вăл ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха ĕçĕсемпе паллашнă, выставкăра çурнă ĕçсене хăй ертсе пыракан колхозра туса пырать. Уя торф тăкма пуçланă, тислĕкпе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, кĕлпе сарлакан усă курма тытăннă. Тырăсене пĕтĕмпех апат панă. Уйрăмăнах вăрлăхсене лайăх суйласа акаççĕ. Яровизацилес умĕн вăрлăхсене тăварлă шыв çине яраççĕ. Ывăр, паха пĕрчĕсем аяла юлаççĕ, выçă пĕрчĕ çиеле тухать. Сăнаса пынă тăрăх, пĕтĕм вăрлăхран 45 процентĕ çеç аяла юлнă, çакă вара вăл чи паха, чи шултра вăрлăх пулать. Çакăн хыççăн тин вара вăрлăхсене яровизацилеççĕ. Кăçал пĕтĕм вăрлăхсене яровизацилесе акнă.

Ку çеç мар-ха. Колхоз уйĕсем икĕ енчен те вăрман хĕррипе чăсăлса выртаççĕ. Вăрман шывĕ уя юхса тухса çĕре час-часах хытарса ярать, вара çĕр çурăла-çурăла каять. Колхозниксем иккĕмĕш çул ĕнтĕ вăрман хĕррипе 2700 метр тăршшĕ канав чавнă. Вара пĕтĕм вăрман шывĕ канав тăрăх юхса çырмана каять. Колхозниксем лачакаллă вырăнсене те типĕтсе усăллă çĕр тума тăрăшаççĕ.

Колхоз уйĕсенче ĕç хĕрсе пырать. Халĕ вир, хуратул акма, çĕрулми лартма хатĕрленеççĕ. Колхозниксем кăçал гектартан 150 пăт тырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Е. ЕНИ.

Калинински р., Чăрăш-Шĕнерти «Красноармеец» колхоз.

Асран кайми кун çывхарса килет

Сурçĕр Буковинăри ĕççыннисем июнь уйăхĕнче хăйсем румын боярĕсен пусмăрĕнчен ирĕке тухнăранпа çулталăк тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче, университетра ятарласах

ФЗО ШКУЛЁСЕНЧЕН ВЁРЕНТСЕ КАЛАРМАЛЛИ ИСПЫТАНИСЕМ

УКЕРЧЁК ÇИНЧЕ: Куславккари ФЗО шкулёнче вёренекен комсомолец-отличник Михаил Золотарев Куславкка комбиначён древцехёнче производствăллă ёçре. Г. КОСТИН фото-ӳкерчёкё.

Пысăк разрядсемпе вёренсе тухаççё

КУСЛАВККА. Комбинатри ФЗО шкулёнче пилёкмёш кун ёнтё испытанисем пыраççё. Испытанисем пулас рабочисем хăйсен ёçне лайăх вёренсе çитнине кăтартаççё. Вёренекенсем испытани вăхăтёнче тума пана ёçсене пысăк пахалăхпа пурнăçлаççё.

Станочниксен групри испытанине пысăк ăнăçлăхпа вёçленё. Вёсем пурте станоксем çинче ёçлеме лайăх хăнăхнă. Испытани комиссийё 80 вёренекене аттестаци панă. Вёсенчен нумайёшё испытанире отлично тата лайăх паллăсем илнё. Испытани комиссийё 27 вёренекене «отлично» паллăпа, 55 вёренекене «лайăх» паллăпа шкултан вёренсе тухни çинчен аттестаци пама йышăннă. Отличниксем 7-мёш разрядпа, лайăх паллă илнисем 5-мёшпе 6-мёш разрядсемпе вёренсе тухаççё. Вёсем çитес кунсенче пысăк квалификацилле рабочисем пулса ёçлеме пуçлаççё.

Ёç вăйёсен резервисен Главнăй Управленийё кăларнă приказ тăрăх, отличниксене похвальнăй грамотăсем памалла тунă. Куславккари ФЗО шкулёнче вёренекенсем похвальнăй грамота илме тивёçлё пулассишён пёр-пёринпе ăмăртса ёçлеççё. Станочниксен группинче вёренекенсенчен 21 çын похвальнăй грамотăпа вёренсе тухаççё. Вёсем продукцисене пысăк пахалăхпа туса кăлараççё, ёç нормине те ирттерсе тултараççё.

Çамрăк станочник В. Леонтьев вёренӳ çулён пирвайхи кунёсенчен пуçласах лайăх паллăсемпе вёренсе пынă. Вăл ёç нормине 140 процент тултарать. К. Трусов та — отличник, хăйён станокё çинче лайăх ёçлет. Ёç нормине 120 процент ытла тултарса пырать. Испытани комиссийё вёсене похвальнăй грамота памалла турё.

Çавăн пекех Михайлов, Исаев, Терентьев т. ыт. вёренекенсем те лайăх вёренсе пынă. Вёсене 7-мёш разряд панă.

Паян рамщиксен группи испытани пама тытăнать. Майăн 23-мёшпе 24-мёш кунёсенче столярсем испытани парараççё.

Испытанин малтанхи кунёсенче çамрăк рабочисем татах та тухăçлăрах ёçлеççё. Вёсем шкултан квалификацилле рабочисем пулса вёренсе тухассине иккеленмесёрех шанма пулать.

Похвальнăй грамотăпа вёренсе тухассишён кёрешетпёр

ÇЕМЁРЛЕ. Эпир, 1-мёш номерлё ФЗО шкулёнче вёренекенсем, испытанисене пысăк пахалăхпа вёçлессишён пётём вăя хурса ёçлеме тытăнăмăр. Вёренекенсем производствăра пёр-пёринпе ăмăртса ёçлеççё.

5-мёш группăра вёренекенсем шкултан похвальнăй грамотăпа вёренсе тухассишён кёрешеççё. Ёç тухăçлăхё ӳссе пырать, продукци пахалăхё те лайăх.

Шкулта вёренекенсем хăйсен ёçне вёренсе çитнё. Вёсем ёç нормине ытлашшипех тултарса пыраççё. Порфирьев — 145 процент, Егоров — 130 процент, Дмитриев — 120 процент тултараççё.

Енисеев, Васильев, Никифоров, Алексеев юлташсем апрель уйăхёнчи плана ăнăçлăн пурнăçланă. Лайăх ёçленёшён шкул дирекцийё вёсене преми панă. Çав юлташсем, паллах, шкултан «отлично» паллăпа вёренсе тухаççё.

И. ЯКОВЛЕВ.

Çёмёрлери ФЗО шкулёнче вёренекен.

Ёç тухăçлăхне ӳстерсе пырассишён

КАНАШ, майăн 19-мёш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри ФЗО шкулёнчен электросварщиксем, тимёрçсем, слесарьсем вёренсе тухаççё. Шкулта вёренекенсем испытанисене лайăх хатёрленсе кётсе илчёç. Испытани вăхăтёнче ёç тухăçлăхне татах та ӳстерсе пыни палăртать.

Электросварщиксен группи испытанисене вёçлерё. Паян тимёрçёсене атестаци параççё, ырантан пуçласа слесарьсем испытани пама тытăнаççё.

Испытани комиссийён председателё пулса вагонсем туса кăларакан цех начальникё инженер Трухин юлташ ёçлет. Комисси шкултан вёренсе тухакансене мёнле разрядпа ёçлеме пултарнине палăртать. Отличниксем похвальнăй грамотăпа вёренсе тухаççё.

Виççёмёш группа испытани пама тытăннă

ÇЕМЁРЛЕ, майăн 19-мёш. (Телефон тăрăх). ФЗО шкулёнче вёренекенсем пысăк хастарлăхпа испытани параççё. Паянхи куна икё группа испытани витёр тухнă, виççёмёш группăра вёренекенсене аттестаци пама тытăннă.

Рамщиксемпе слесарьсем, пурё 80 çын, испытанисене ăнăçлăн вёçлерёç. Вёсенчен нумайёшё пысăк разрядсемпе вёренсе тухаççё.

Плотниксен группи испытани вăхăтёнче ёç тухăçлăхне ӳстерсе пырать.

Германи самолечёсене Сири территорийё урлă яни çинчен Гавас—ОФИ агентстви пёлтерни

ЛИОН, майăн 17-мёш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви Бейрутран панă пёлтерӳре çапла каланă: нумаях пулмасть Германи самолечёсем Сири территорийё урлă вёççе каçнă. Çав самолетсенчен 15 шён юлашки кунсенче Сирири аэродромсене ирёксёр анса лармалла пулнă. Перемири тунă условисем тăрăх, Франци влаçёсем, çав самолетсем кёске срокрах Сирирен тухса кайччăр тесе, мерăсем йышăннă.

Майăн 14-мёшпе 15 мёшёнче Англи авиацийё Тадмор (Пальмира) çине пырса бомбăсем пăрахнă. Майăн 15-мёшёнче Райякри сывлăш бази çине бомбăсем пăрахнă, вăл базăна Германин пёр самолечё те нихăçан та анса ларман.

Майăн 16-мёшёнче Англи самолечёсем Бейрут çывăхёнчи вырăнсем, çавăн пекех Райякри аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Анчах нимёнле сиен те тăвайман. Франçин Сирири верховнăй комиссарё çак тёлёшпе Англи консулне протест панă.

Итали самолечёсем Ирака пырса çитнё

РИМ, майăн 18-мёш. (ТАСС). «Вочедʼ Италиа» хаçат пёлтернё тăрăх, Итали самолечёсем Иракри аэродромсене пырса çитнё.

БОРДО, майăн 18-мёш. (ТАСС). Гавас—ОФИ агентстви Стефани агентстви Стамбулран пёлтернине парать, унта Иракри аэродромсене Итали самолечёсем пырса çитни çинчен каланă.

Сирири вăрçă ёçёсем

НЬЮ ЙОРК, майăн 17-мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Бейрутри корреспонденчё, Франçин Дамаскри çыннисем пёлтернё тăрăх, çапла пёлтерет: Франци самолечёсем Англин виçё самолетне çавăрса илсе, вёсене Палестина патнелле хыçалтан хăваласа пынă. Малалла пёлтерӳре çапла каланă: Англи бомбардировщикёсем, Вăтаçёр тинёсё енчен Алеппо урлă вёççе пырса, Тадморта (Пальмира) Германи самолечёсен отрячёсем çине бомбăсем пăрахнă, Германи самолечёсене çавăнтан Ирака илсе пыраççё.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18 мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Стамбулри корреспонденчё çапла пёлтерет: Англи самолечёсем Сирирен Ирака каякан поезд çине тапăннă, поезд çинче 200 сириец пулнă. Поезд çине тата французсен çар снаряженине те тиенё пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мёш. (ТАСС). «Нью Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Англи самолечёсем Райякри тата Мерçри (Сирири) аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенё, çавăн пекех французсен автомашинисене атакăланă, вăл машинăсемпе арабсен пёр ушкăнё Сирирен Ирака кайма тухнă пулнă.

Турципе Сири хушшинчи чикёне хупнă

СТАМБУЛ, майăн 18-мёш. (ТАСС). Майăн 16-мёшёнчен пуçласа Турципе Сири хушшинчи чикёне хупнă. Турципе Сири хушшинче поездсем çӳреме чарăннă.

Герцог Аоста парăнмалли условисем çинчен ыйтса пёлнё

ЛОНДОН, майăн 18-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан официальнăй пёлтерёве парать, вăл пёлтерӳре çапла каланă: Италин Абиссинири войскисен командующийё тата Италин Хёвелтухăç Африкăри вице-королё герцог Аоста англичансенчен Италин Амба-Алага районёнчи вăйёсем парăнмалли условисем çинчен ыйтса пёлнё.

Япони США-на панă сёнӳсем çинчен „Нью-Йорк“ геральд трибюн“ хаçат корреспонденчё пёлтерни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 17-мёш. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Токиори корреспонденчё çапла пёлтерет: авторитетлă çынсем хушшинче: нумаях пулмасть Америкăри Пёрлешӳллё Штатсем Токиори официальнăй мар, анчах Японин ответлă çыннисенчен Японипе Америка хушшинче килёшӳ тăвасси çинчен пана сёнёве илнё, çав килёшӳ Инçет Хёвелтухăçне пётёмпех тата Кăнтăрти тинёссен районёсене çавăрса илет, тесе пёлтереççё. Çав сёнӳсем (США правительствин позицине пёлме хăтланни çав сёнӳсен тёллевёнчен тухса тăрать пулмалла) Японипе Америка хушшинче килёшӳ тумашкăн çакăн пек никёс кăларса тăратаççё: Японипе Китай хушшинчи конфликтра США посредник пулса ёçлесси, малтанлăха Япони войскисене Китайăн шалти районёсенчен кăларса. Пёрлешӳллё Штатсем Китайра Японин пуçпулса тăрассине йышăнасси, Японии енчен кăнтăрта тăшманла ёçсем тăвассинчен тытăнса тăма пулни, Японине экономика тёлёшёнчен, самахран, кăнтăрта, питех те кирлё уступкăсем тăвасси, çавăн пекех, ăна Америкăран кивçен парасси те пулё.

Корреспондент кăтартса панă тăрăх, хăшпёр çынсем хушшинче: Японии сёнёвёсене США правительстви тёплён пăхса тухё, тесе шутлаççё. Анчах ку тёлёшпе каласусем пуçличчен, Вашингтон Японирен çак условисене пурнăçа кёртме ыйтё: 1938 çулти январьте тунă заявление çемçетесси, вăл заявление çапла каланă пулнă: Япония Чан Кай-шипе çыхăнма шутламасть, тенё: Японипе Китай хушшинчи конфликта виççёмёш держава хутшăннине Япония чăтма пултараймасть, тесе хăй темиçе хутчен те пёлтернисенче улшăнусем тăвасси; Инçет-Хёвелтухăçёнче Японин экономикăллă планёсем çинчен ăнлантарса парасси. Кунсăр пуçне, Японипе тăвас килёшӳ Япония тёнёлсен держависен союзёпе США-на хирёç усă курмалла мар пулса килёшессине те пăхмалла, тесе пёлтереççё.

Японири ответлă çынсем пана çав çӳлте асăннă сёнӳсем çине Японин правительстви çирёптён çаварăнса пăхассипе пăхмасси — паллă мар. Анчах, çака паллă, Японире тёрлёрен шухăшлаççё: хăшё-пёрисем Чунцинпа килёшӳ тăвас майлă, теприсем Чунцина хирёç вăрçассине малалла та туса пырассишён тата Нанкина йышăнассишён калаçаççё.

Ытти сведенисем тăрăх Японипе Америка хушшинче килёшӳ тăвасси çинчен сёнӳсем парасси Японирен мар, США-ран килнё.

Петэн сăмахё

ЛИОН. майăн 16-мёш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви Виширен Петэн радио тăрăх калана сăмахăн содержанине парать. Хăй сăмахёнче маршал Петэн: адмирал Дарлан нумаях пулмасть Германире Гитлерпа тёл пулнă, тесе пёлтернё. Петэн çапла каланă: вăл çак тёлпулăва ырлана, вăл тёлпулу, тесе каланă Петэн, «малашне пирён çулйёр мёнле пулассине уçса палăртма тата Германи правительствипе пуçланă калаçусене малалла туса пыма май парать.

Франçири халăха хăй хыççăн пыма чёнсе, Петэн çакна шанса тăни çинчен пёлтернё: Германипе тăвакан калаçусем ăнăçлăн вёçленёç тата Франçия «тёнчере хăйён Европăри тата колонийллё державăн вырăнне сыхласа хăварма пултарё».

США-ра куллен кирлё çимёссен хакёсем ӳсни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 17-мёш. (ТАСС). Юнайдет пресс агентстви пёлтернё тăрăх, ёç министерствин даннăйёсем тăрăх, нумай продуктсем, çав шутра çăмарта, çу, аш-какайăн хăшпёр сорчёсем, фруктсемпе пахча-çимёссем те, ирттё çултипе танлаштарсан, чылайăх хакланнă. Кунпа пёрлех çимёссен пахалăхё чакса пырать, мёншён тесен лайăх пахалăхлă чёртавар çар промышленноçне каять. Майёпен вăрçă экономики çине куçса пынă май, çавăн пекех тата налогсене хыттăн пысăклатма пăхнă пирки малашне рабочисен реальнăй ёçкуçине чакарасси хăратса тăрать. Пысăк вырăнта тăракан официальнăй çынсем тата хаçатсем вооруженисен программине пурнăçлас тёлёшпе халăха «жертвăсем тума» кирли çинчен асăрхаттараççё.

Военнообязаннăйсене регистраци туни

ЛОНДОН, майăн 17-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, майăн 17-мёшёнче Англире военнообязаннăйсене, 39 çултисенё, çёнёрен регистраци туса ирттернё. Çав регистрацинче пулнă çынсене хăшпёр вăхăт хушши çар службине илмёç, тесе шутлаççё. Анчах, тесе кăтартса панă. пёлтерӳре, военнообязаннăйсен пёр пайне гражданла халăха сывлăшран пырса тапăнассинчен сыхлас çёре илме пултараççё.

Англи самолечёсене Çывăхри Хёвелтухăçне яни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 17-мёш. (ТАСС). Юнайдет пресс агентстви пёлтернё тăрăх, Гибралтара Англи самолечёсем нумайăн пыраççё, вёсем Англирен вёççе пыраççё пулмалла. Горючисем илнё хыççăн, вёсем хёвелтухăçне вёççе каяççё.

Франçири çар сучё йышăннă приговорсем

БЕРЛИН, майăн 17-мёш. (ТАСС). Германири информаци бюровё пёлтернё тăрăх, Клермон-Ферранри çар трибуналё ёнер Франци çарёнчи 20 салтак тата офицер тёлёшпе заочно майпах приговорсем йышăннă, вăл салтаксемпе офицерсем де Голль генерал енне тарса каснă пулнă. Айăплакансенчен виççёшне вёлермелле, иккёшне — ёмёрлёхе каторгăна ямалла, 9 çынна 20 çул хушши каторгăллă ёç сенче тытса ӳсрамалла, пёрне — 20 çул хушши крепоçре хупса ӳсрамалла, 5 çынна — кашнинех 10-шар çуллăха тёрмере лартмалла тунă.

Вăтаçёр тинёсёнче суднăсемшён çӳреме хăрушă зонăна пысăклатни

ЛОНДОН, майăн 17-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Англи правительстви февральпе апрель уйăхёсенче Вăтаçёр тинёсёнче суднăсене çӳреме хăрушă тесе пёлтернё зона чиккине тата ытларах сарни çинчен пёлтернё. Халё ёнтё çав зонăн чиккисене Рас Эль Кенанс мысё патёнчен (Египет) пуçласа Турципи Гелидония тёкен мысран виçё миляра тăракан пункт патне çиттичен туса палăртнă линирен хёвелтухăç енчи зонăсем пурте кёреççё.

Гетеборгра пысăк пушар пулнă

СТОКГОЛЬМ, майăн 17-мёш. (ТАСС) Хаçатсем пёлтернё тăрăх, ёнер Гетеборгра, порт таврашёнче, пысăк пушар тухнă. Пушар упаковочнăй фабрикăра пуçланнă та пит вăйлăн сарăлнă. Çынсем пурăнакан икё квартал çунса кайнă, «Ларс Форселиус» ятлă акционерлă общество фабрикин склачёсем, тăвар усрамалли пысăк склад, йывăç материалсен склачёсем тата «Арбетарпостен» хаçат редакцийён çурчё çунса кайнă.

Пушар 1,5 — 2 миллион крон сиен кӳнё. Çынсем хушшинче жертвăсем пулман.

КЁСКЕН

▲ Америка конгресён членё республиканец Болдуин представительсен палатине закон проекчё тăратнă, вăл проект Рузвельта Америкăра Эйрене вооружени туянма ирёк памашкăн тата вăл вооруженине Эйрене пёр хăрушлăхсăр çитермелле тума хушать.

▲ Англире нацийлё регистраци витёр тухнă 126.000 хёрарăма хăйсене ёçе яма пыма хушнă. Нацийлё регистраци витёр 1919—1920 çулсенче çуралнă хёрарăмсем 711.780 çын тухнă.

М. Ю. Лермонтов вилнёренпе çёр çул тултарнине паллă тăвасси

М. Ю. Лермонтов вилнёренпе çёр çул тултарнине паллă тунă ятпа ССР Союзён Халăх Комиссаресен Совечё Мускавра тата Ленинградра вырăссен асламаллă поэчён памятникёсене лартма йышăнкă. Мускаври Красные Ворота площальне Лермонтов ятне параççё. Пятигорскра Лермонтовăн çурт музейне организацилеççё, Мускавра поэтăн пурнăçёпе творчествине кăтартса паракан выставка тăваççё.

Государствăн Мускаври университетёнче Лермонтов ячёпе 400-шер тенкёлёх 10 стипенди тăваççё.

ССР Союзёнчи халăхсене поэт творчествипе анлăн паллаштарас шутпа Лермонтов сочиненийёсен пуххине 4 том кăлараççё, вёсен тиражё 100 пин экземпляр пулать, тата суйласа илнё произведенисен однотомникне кăлараççё. унăн тиражё 500 пин экземпляр пулать. «Герой нашего времени», «Демон», «Мцыри», «Песня про купца Калашникова» произведенисене уйрăм кёнекесемпе кăлараççё, вёсен тиражё 250—300-шер пин экземпляр пулать.

Çыхăну Наркомачё юбилейлă марка кăларать. (ТАСС).

ФУТБОЛ

Малтанхи тёлпулусем

Майăн 18-мёшёнче «Медик» спорт обществин стадионё уçăлчё. Çак куй Шупашкарти «Спартак» тата «Динамо» обществисен пёрремёш командисем, «Спартак» обществин иккёмёш команди, «Медик» тата «Учитель» обществисен сборнăй командисем тёл пулса вылярёç. «Спартак» тата «Динамо» обществисен пёрремёш командисем хушшинчи вăйăв 2:2 шутпа никам çёнтерейменнипе пётрё. «Спартак» обществин иккёмёш командине сборнăй команда 4:1 шутпа çёнтерчё.

Футбол вăйăин малтанхи кунё Шупашкар футболисчёсем тренировкăра тулманнине кăтартрё. Икё вăйăн те интереслă мар, сӳрёк пулчёç, вылякансем футбол вăйăин техникишён тăрăшманнине кăтартрёç.

Динамовецсен çёнтерёвё

Спортăн çуллахи сезонё уçăлнă ятпа «Медик» обществин стадионёнче тёрлё дистанцисем тăрăх чупу пулса иртрё. 4 × 100 дистанцине «Динамо» обществин арçынсен команди малти вырăна тухрё. Иккёмёш вырăна «Буревестник» команди, виççёмёш вырăна «Спартак» команди тухрёç.

Хёрарăмсен командисенчен спартаковкăсем пёрремёш вырăна тухрёç.

Пысăк шведский эстафетăра «Динамо» команди выляса илчё. «Буревестник» обществин хёрарăмсен команди ытти командăсене çăмăллăнах çёнтерсе пёрремёш вырăна тухрё.

Лотерей билечёсене вырнаçтарас ёç

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсовечё Осоавиахимăн XV-мёш лотерей билечёсене вырнаçтарас тёлёшпе тăрăшса ёçлерё. Паянхи куна ялсовечёпе 715 тенкёлёх сарнă, укçине те тӳлесе татнă.

Учительница К. Иванова юлташ лотерей билечёсене вăхăтра вырнаçтарма улăшрё. Ялсовечё хăй çине илнё бязательствăна ирттерсе пурнăçларё.

Я. ВАСИЛЬЕВ.

ÇЕРПУ. Тутарла Кăнаш ялсоветне кёрекен колхозсем лотерей билечёсене 670 тенкёлёх вырнаçтарма пулнă. Çак обязательствăна колхозсем ăнăçлăн пурнăçларёç, лотерей билечёсене вырнаçтарса çитернё. А. МИХЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВНИМАНИЮ ГРАЖДАН!

Все аптеки и магазины Чувашпотребкоуправления

ПРИНИМАЮТ

в неограниченном количестве за наличный расчет

АПТЕКАРСКУЮ ПОСУДУ.

3—2 Чувашаптекоуправление.

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ёçёсен дневникё)

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ ФРОНТРА авиаци пысăк активлăх кăтартать. Германи самолечёсем, тесе пёлтернё Германи командованийён сводкинче, иртнё талăк хушшинче Англи аэродромсем çине пырса бомбăсем пăрахнă. Майăн 17-мёш ыран теннё чух çёрле Германи бомбардировщикёсен соединенийё Центральнăй Англири пирвайхи вăрçă хатёрёсем тăвакан предприятисемпе вăрçă хатёрёсем тăратмалли базăсене атакăланă. Кунсăр пуçне, Германин хёçпăшалла вăйёсем тинёс çинче те хăйсен операцийёсене туса пынă. Англин таварсем илсе çӳрекен сакăр пароходне путарни çинчен пёлтереççё.

Майăн 16-мёшёнче кăнтăрла, тесе пёлтерет Рейтер агентстви, Англи авиацийё Норвеги çыранё сывăхёнче Германи суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Майăн 17-мёш ыран теннё чух çёрле Англи бомбардировщикёсем Кельн çине вăйлăн пырса тапăннă. Англи авиацийён пысăк мар вăйёсем Булоньри (Франция) доксем çине пырса бомбăсем пăрахнă.

ВАТАÇЁР ТИНЁСЁНЧЕ малтанхи пекех авиаци пысăк активлăхпа кёрешет. Майăн 16-мёш ыран теннё чух çёрле тата майăн 16-мёшёнче кăнтăрла, тесе каланă Германи командованийён сводкинче, Германи самолечёсем Мальта утравёнчи аэродромсемпе портсен сооруженийёсем çине бомбăсем пăрахнă. Англи авиацийё, тесе паллă тунă Англи командованийён коммюникинче, Грецири нимёçсем йышăннă аэродромсем çине пырса тапăннă.

ÇУРÇ�ĔР АФРИКĂРА, тесе кăтартнă Германи сводкинче, Англин майăн 15-мёшёнче Соллумпа Капуццо фортне туртса илнё чаçёсем Германипе Итали войскисем хёснипе хёвелтухăç еннелле чакнă. Рейтер агентствин Хёвеланăç пушхирёнче Англин малти чаçёсемпе пёрле çӳрекен корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Германи колоннисем, пурё пилёк колонна, нумаях пулмасть наступлени пуçланăскерсем, исходнăй позицисем çине хăварттăн чакнă. Войскăсен чылай пысăк пайё, Англи артиллерийё перçе тăнине, Капуццо — Бардия линийё çине чакнă. Войскăсен тепёр пайё Ливипе Египет чикки тăрăх тăсăлса выртакан, пралукран карса тухнă загражденисен линийё хыçнелле чакнă. Тобрук районёнче, тесе пёлтерет малалла корреспондент, нимёçсем оборона линине шалалла кёнё. Корреспондент шухăшпёпе çак фактсем пурте Хёвеланăç пушхирёнчи положени пысăкăн улшăнине кăтартса параççё.

Çапăçусене вăрçă вăрçакан енсен сывлăш-çар вăйёсем активлăн хутшăнаççё. Германипе Итали самолечёсем, тесе палăртнă Германипе Итали сводкинче, Англин Тобрукпа Соллум патёнче çапăçакан чаçёсем çине пырса бомбăсем пăрахаççё. Англи авиацийё, тесе кăтартса панă Англи сводкинче, Киренаикăра механизированнăй чаçсем, автотранспорт тата Германипе Италин пёр çёре пухăнса тăнă войскисем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенё. Боеприпассем тата горючи тиенё грузовиксене чылай пётерсе тăкнă. Бенгази çине каллех пырса тапăннă. Рейтер агентствин корреспонденчё юлашки вăхăтра Англи авиацийё Бенгази çине пырса тапăнни çинчен тапратса, çапла кăтартса парать: çак пысăк вырăн йышăнса тăракан порт çине час-часах пырса бомбăсем пăрахаççё, вăл порта противникăн пысăк мар судни кăна кёме е унтан тухса каймă пултарать.

ХЁВЕЛТУХАÇ АФРИКĂРА, Абиссинире, Англин Çывăхри Хёвелтухăçёнчи вăйёсен командованийён коммюникинче калана тăрăх, вăйлă çумăрсем çунине пăхмасăрах, имперски войскăсем çёнёрен Амба-Алага еннелле малалла кайнă. Абиссинин кăнтăр районёсенче Англи чаçёсем пысăк вырăн йышăнса тăракан порта — Шашамана йышăннă (вăл порт Шала ятлă кӳлё сывăхёнче, Аддис-Абебăран кăнтăралла).

Англин Çывăхри Хёвелтухăçёнчи сывлăш вăйёсен командованийён коммюникинче пёлтернё тăрăх, Родези эскадрильнинчи самолетсем Амба-Алагăран çурçёр енче) темиçе хутчен те пырса тапăннă. Кунсăр пуçне, Англи авиацийё Центральнăй Абиссинире Англин сухопутнăй войскисене пулăшнă. Де Голль авиацийён самолечёсем Гондарти аэродром çине пырса бомбăсем пăрахнă.

* * *

ИРАКРА, тесе паллă тунă Ирак çарён командованийён коммюникинче, Ирак чаçёсем Басра районёнче англичансен позицийёсене атакăланă, унта пысăк çапăçу пулса иртнё. Англи авиацийё Басра, Мосула тата Багдад районёнче операцисене активлăн туса пынă. Ирак самолечёсем Хаббани çине пырса тапăннă.

Англин Çывăхри Хёвелтухăçёнчи сывлăш вăйёсен командованийён коммюникинче пёлтернё тăрăх, Англин Иракра çапăçакан тинёс авиацийё Самаррти (Багдадран çурçёр еннелле) казармăсене атакăланă.

Рейтер агентствин Каирти корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Каирта официальнăй йёркепех çапла пёлтернё: майăн 15-мёшёнче Англи авиацийё Сирири виçё аэродром çине — Тадморти (Пальмира), Дамаскри тата Райякри аэродромсем çине пырса тапăннă. Англин Çывăхри Хёвелтухăçёнчи сывлăш вăйёсен командованийён коммюникинче пёлтернё тăрăх, Тадморта (Пальмира) Италин пёр самолечё тата Германин пилёк самолечё çине пенё.

Майăн 17-мёш. (ТАСС).

ЧĂВАШСЕН МУЗЫКАЛЬНĂЙ УЧИЛИЩИНЕ

1941—42-мёш ВЁРЕНӲ ÇУЛЁНЧЕ СТУДЕНТСЕНЕ ЙЫШĂНАÇÇЁ.

ВЁРЕНМЕ ÇАК ОТДЕЛЕНИСЕНЕ ИЛЕÇÇЁ:

1. Вокальнăй, 2. Фортепиаппăй, Оркестровăй—мёнпур инструментсем тăрăх тата 4. Музыкальчо-педагогически—хор специальноçё тăрăх.

Заявленисене августăн 15-мёшчен йышăнаççё.

Приемнăй испытанисем августăн 20-мёшёнче пуçланаççё.

Шупашкарта мар, урăх хулара пурăнакансен—вёсем заявлени панă пулсан—испытани тытма музыкальнăй училищёрен испытанине килме чёнсе яна извещени илнё хыççăн тин килмелле.

Музыкальнăй училищёне ССР Союзён граждăнёсене пурне те—15 çултан пуçласа 25 çула çитиччен илеççё. образовани туллимар вăтам шкулăн 7-мёш класёнчен вёренсе тухни чухлё пулмалла. Вёренме кёрекенсене вăтам шкулăн 7-мёш класс программи тăрăх çак предметсемпе испытани тыттараççё: вырăс чёлхи тата тăван чёлхе, арифметика тата алгебра—устно тата писменно, геометри, географи, СССР конституцийё тата СССР историйё—устно.

Кунсăр пуçне хăлха мёнле илтнине тата ритмичноçе тёрёслеççё.

Туллимар вăтам шкултан пур предметсемпе те отлично вёренсе тухнисене общеобразовательнăй дисциплинăсем тăрăх испытани тыттармаççё.

Заявленисемпе пёрле çакăн пек документсем ямалла: 1) Вёренни çинчен, 2) Хăçан çурални çинчен, 3) Медицински справка, 4) Икё фотокарточка.

Испытанине килекенсем валли общежити пур. Заявленисемпе документсемпе пёрле утмăл пуслăх почта марки хурса çак адреспе ямалла: г. Чебоксары, ул. Чувашская, дом № 1, Муз. училище.

ДИРЕКЦИ.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ёçхёрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 3055. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. б. 58 84 п. л.